# Кĕр парни: сусăрсемпе ватăсене ял хуçалăх продукцине килех тӳлевсĕр леçсе параççĕ ● 2 стр.


ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

# ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ

34(956) №, 2016, авăн/сентябрь, 3

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.



●Чăваш çамрăкĕсен пухматĕнче – ылтăн та кĕмĕл 3 стр.

●Мур ернĕ сыснасемшĕн тăкака саплаштармашкăн хыснаран укçа уйăрнă 4 стр.

●Нумай ачаллă амăшĕсене ялти пурнăç тивĕçтерет 5 стр.

●Шăк хăмпи шыççан, ӳт хытсан, чăхха сăвăс аптăратсан 8 стр.

●Укçа паман упăшкапа мĕнле пурăнмалла? 9 стр.

●Çурине хӳтĕлесе кушак харăсах 7 йытта тапăннă 11 стр.


ÇĂЛТĂР ÇӲПÇИ

## Тухтăр патне... сывă çыннăн каймалла



Григорий ФЕДОРОВ, артист

– Пурнăçра паян чи шухăшлаттараканни – больницăсенчи черетсем. Нумаях пулмасть ачапа невролог патне кайрăмăр та унăн пӳлĕмне шăп та лăп пилĕк сехетрен кĕтĕмĕр. Больница – лăк тулли. Ачасем ывăннипе кăшкăрашмах тытăнчĕç. Аслисене те çавăн чухлĕ ларма чăтăмлăх кирлĕ çав. Тӳсĕмлĕх пĕтсен пысăккисем те кăмăлсăрланма тытăнаççĕ. Тухтăр патне лекме çав тери сывлăхлă та чăтăмлă пулмалла-мĕн.

Шупашкарти «Садовый» çĕнĕ районта пурăнатпăр. Поликлиника уçатпăр терĕç. Чăнах та, педиатрсем ĕçлеççĕ унта. Анчах та специалистсем патне Кăнтăр хĕвеланăç районĕнчи больницăна каймалла. Унта та халăх – тăп-тулли. Çитме чăрмавлă тата: общество транспортне виçĕ хутчен улăштармалла. Çав тухтăрсене пирĕн районти больницăна эрнере пĕр кун та пулин килмелле тума çук-ши вара?

Эпир пурăнакан вырăнта... шкул çук. Шантараççĕ – кĕтетпĕр. Троллейбус та çӳремест. Маршруткăсемпе укçалла ярăнма тивет ачасен. Шкула кайма-килме ачасене куллен укçа памалла-çке. Хăш-пĕр çемьере вара икĕ-виçĕ ача. Пирĕн те.

Йĕри-тавра хушма пĕлӳ илмелли вĕренӳ учрежденийĕсем çукки те кăткăслăх кӳрет.

Культура тытăмĕнче ĕçленĕ май, çакăн пирки те сăмах хускатас килет. Культура шайĕ чаксах пырать. Сцена çине камăн кăмăл пур – çавă тухать. Тӳрех артист теççĕ хăйсене. Хăш-пĕр телекуравра такăнмасăр икĕ сăмах калайман çынсем эфира тухаççĕ. Республика тулашĕнче пурăнакансем те кăсăкланаççĕ вĕсемпе. Пирĕн культура шайне çаксене кура хаклаççĕ те. Аван мар пулса тухать. Манăн шухăшпа, кашни çĕртех профессионалсен, хăйĕн ĕçне пĕлекенсен тăрăшмалла. Эпĕ хама тухтăр теместĕп вĕт...

## Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 03.09 | + 19 | + 13 |
| 04.09 | + 19 | + 14 |
| 05.09 | + 16 | + 12 |
| 06.09 | + 16 | + 9 |
| 07.09 | + 12 | + 10 |
| 08.09 | + 14 | + 10 |
| 09.09 | + 12 | + 9 |




Татьяна НАУМОВА сăнӳкерчĕкĕ.

# Ачасене ăс пухма, педагогсене ĕçлеме хăтлă пултăр

**Йăлана кĕнĕ тăрăх, авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче республикăри мĕнпур вĕренӳ учрежденийĕнче урока йыхравласа шăнкăрав янăрарĕ. 14,7 пин ытла ача кăçал пĕрремĕш хут парта хушшине ларчĕ. Чăваш Енри 468 шкулта 130 пин ытла хĕр-упраçпа яш-кĕрĕм ăс пухĕ. Пĕтĕмĕшле вара республикăра 999 вĕренӳ организацийĕ ачасемпе çамрăксене хапăл. Вĕсенче çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче 200 пине яхăн шкул ачипе студент ăс пухĕ.**

Пĕлӳ кунне халаллана уявсене ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăнчĕ. Вăл И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне çитрĕ. Пĕрремĕш курсра кунта кăçал 2,3 пин çамрăк вĕренĕ. Вĕсенчен 200 ытларахăшĕ – ют çĕршывран килнĕскерсем.

Икĕ кун маларах, çурлан 29-мĕшĕнче, республика Пуçлăхĕ ЧПУн 7-мĕш общежитине юсас ĕç еплерех пынипе вырăна тухса паллашнăччĕ, студентсем еплерех условисенче пурăннипе кăсăкланнăччĕ.

Михаил Васильевич кĕçнерникунах И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн студенчĕсем валли Чăваш патшалăх филармонийĕнче йĕркеленĕ уява та хутшăннă.

Республика Пуçлăхĕ педагогика университечĕ 86 çулта 52 пин ытла специалист хатĕрленине, вĕсенчен чылайăшĕ Чăваш Ен мухтавĕ пулса тăнине палăртнă. Ачасене – вĕренме, педагогсене ĕçлеме хăтлă пултăр тесе нумай ĕçленине каланă.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче кунта 1215 студента йышăннă. Вĕсенчен 928-шне – бюджет вырăнĕсене.

Комсомольски районĕнчи Элпуçри вăтам шкулта вĕренекенсемшĕн вара уяв çурлан 31-мĕшĕнчех пуçланнă: унта çĕнĕ шкул уçăлнă. Хаваслă мероприятие Михаил Игнатьев та хутшăннă, ачасем çак шкула хаваспа, уçă кăмăлпа килессе, вĕсене кунта хăтлă пуласса шаннине палăртнă.

Çĕнĕ çурт 165 шкул ачипе шкул çулне çитмен 40 шăпăрлана йышăнма хатĕр. Кăçал вара кунта 105 арçын ачапа хĕрача ăс пухĕ. 16-шĕ – Элпуç, Явăш, Хирти Выçли, Хирти Мăрат ялĕсенчен пĕрремĕш класа килнĕскерсем.

Татьяна НАУМОВА.



Пичет лаптăкне Федерацин «РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ çинчен» саккунĕн 66-мĕш ст. килĕшӳллĕн "ВСЕРОССИЙСКАЯ ПОЛИТИЧЕСКАЯ ПАРТИЯ "РОДИНА" политика партине тӳлевсĕр панă



Пичет лаптăкне Федерацин «РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ çинчен» саккунĕн 66-мĕш ст. килĕшӳллĕн «КПРФ» политика партине тӳлевсĕр панă

ЯЛ ХУÇАЛĂХ

# Хир пушанать

Республикăра вырма вĕçленсе пырать. Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне 278,9 пин гектар çинчен пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене пуçтарса кĕртнĕ. Çакă пĕтĕмĕшле лаптăкăн 97,5 процентне танлашать. 628,3 пин тонна тырă вырнă. Ку кăтарту пĕлтĕрхинчен чылай пысăкрах /2015 çулта – 437,9 пин тонна/. Вăтам тухăç – пĕр гектартан 22,5 центнер. Вăрнарсемпе Елчĕксен кăтартăвĕ – чи лайăххи. Вĕсем пĕр гектартан 28 центнера яхăн тырă пуçтарса кĕртнĕ. Вăрнарсен, тĕслĕхрен, ыраш тухăçĕ чи пысăкки – 31,8 центнер.

Çĕрулми уйĕсем те пушанаççĕ: 882 гектар лаптăкран 17,8 пин тонна кăларса илнĕ. Вăтам кăтарту – пĕр гектартан 202,3 центнер. Кăçалхи тухăç пĕлтĕрхинчен пĕчĕкрех /2015 çулта – 220,2 центнер/.

273 гектар çинчи 5 пин ытла тонна пахчаçимĕçе пӳлмене хывнă. Вăтам тухăç 187,2 центнерпа танлашать.

14 гектар çинчен хăмла татнă. 1193 гектар çинчен рапс çулса кĕртнĕ.

Планпа пăхнă тăрăх, кĕрхи пĕрчĕллĕ культурăсем 100 пин гектар йышăнмалла. 61,7 пин гектар акнă та ĕнтĕ.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

## «ХЫПАРА» – КАШНИ ÇЕМЬЕНЕ

### Сентябрь уйăхĕн 1-мĕшĕнчен – 30% йӳнĕрех

Раççей почти **сентябрĕн 1-мĕшĕнчен** тытăнса **декабрь уйăхĕн 25-мĕшĕччен** Раççей почтин каталогне кĕнĕ хăш-пĕр кăларăма /социаллă пĕлтерĕшлĕ хаçат-журнала/ 2017 çулăн I çурри валли çырăнмашкăн 30% чакарасси çинчен пĕлтерчĕ. Çак переченьте – **«Хыпар» Издательство çурчĕн 10 кăларăмĕ** *(вĕсене таблицăра хурапа палăртнă).*

**Хаçат-журнала 2017 çулăн 1-мĕш çурринче илсе тăмашкăн çак хаксемпе çырăнма пулать**

| Кăларăмсем | Индекс | Почта уйрă-мĕсенче | "Советская Чувашия" киоскĕсенче | Редак-цире |
|---|---|---|---|---|
| **Хыпар** | **54800** | **572,88** | **288** | **144** |
| **Хыпар-эрнекун** | **78353** | **279,36** | **150** | **90** |
| **Çамрăксен хаçачĕ** | **54804** | **333,36** | **234** | **144** |
| **Чăваш хĕрарăмĕ** | **11515** | **297,24** | **222** | **141** |
| Сывлăх | 11524 | 237,36 | 114 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 237,36 | 114 | 81 |
| **Хресчен сасси** | **54838** | **250,08** | **168** | **114** |
| **Тăван Атăл** | **11529** | **300,96** | **252** | **198** |
| **Капкăн** | **24608** | **153,42** | **150** | **108** |
| **Тантăш** | **54802** | **226,08** | **138** | **90** |
| **Самант** | **73208** | **171,84** | **162** | **120** |
| **Тетте** | **73771** | **135,42** | **114** | **90** |
| ЛИК | 83429 | 149,04 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 330,60 | 192 | 144 |
| Собрание законодательства ЧР | 54847 | 781,08 | 660 | 570 |



Пичет лаптăкне Федерацин «РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ çинчен» саккунĕн 66-мĕш ст. килĕшӳллĕн «КОММУНИСТИЧЕСКАЯ ПАРТИЯ КОММУНИСТЫ РОССИИ» политика партине тӳлевсĕр панă

ЯРМĂРККĂ

# Кĕр парни

Çурла уйăхĕн 20-мĕшĕнче Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Улатăр, Канаш, Çĕмĕрле хулисенче «Кĕр парни – 2016» ярмăрккă ĕçлеме пуçларĕ. Ял хуçалăх продукцине ятарлă вырăнсенче автотранспортранах сутма пулать. Вырăншăн укçа илмеççĕ. Пенсионерсене, ветерансене, сусăрсене тавара киле тӳлевсĕр леçсе парӑççĕ.

Çурла уйăхĕн 28-мĕшĕччен 80 тонна çĕрулмипе ытти пахчаçимĕç 1167 пин тенкĕлĕх сутнă. Шупашкарта, сăмахран, пĕр килограмм çĕрулмие – 12, купăстана – 10, пуçлă сухана – 15, кишĕрпе хĕрлĕ кăшмана 15 тенкĕпе туянма пулать.

Ярмăрккăра çавнашкалах пахчаçимĕç консерви, пыл, çăмарта, тулă, урпа, ыраш... илме май пур.

Тĕп хулара «Дар» ООО пасар территорийĕнче, «Фиалка» суту-илӳ центрĕ çывăхĕнче, «Николаевский» тата «Северный» суту-илӳ комплексĕсенче ярмăрккă иртет.

**Мария РОМАНСКАЯ.**



Пичет лаптăкне Федерацин «РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ çинчен» саккунĕн 66-мĕш ст. килĕшўллĕн «Партия народной свободы «ПАРНАС» политика партине тўлевсĕр панă



Пичет лаптăкне Федерацин «РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ çинчен» саккунĕн 66-мĕш ст. килĕшўллĕн «ПАТРИОТЫ РОССИИ» политика партине тўлевсĕр панă



Пичет лаптăкне Федерацин «РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ çинчен» саккунĕн 66-мĕш ст. килĕшўллĕн «ЕДИНАЯ РОССИЯ» политика партине тўлевсĕр панă


УЯВ

# Пĕрлĕхре – вăй



Чăваш республикинчи Хĕрарăмсен союзĕ ĕç-хĕлне тĕрлĕ гранта тивĕçсе аталантарса пырать. Вĕсенчен пĕри – «Чăваш Ен – тĕрлĕ халăхăн пĕрлĕхĕн тата культурин вăйĕ». Проектăн тĕп шăнăрĕ республикăри тĕрлĕ наци культурине çĕклессипе, ырă йăла-йĕркине чĕртсе тăратассипе, упрассипе, аталантарассипе çыхăннă. Ăна пурнăçа кĕртнĕ май хĕрарăмсен общество организацийĕ пултарулăх тĕрлĕ фестивалĕ йĕркелет. Вĕсен йышĕнче: «Наци апат-çимĕçĕн маçтăрĕ», «Чăваш Енри тĕрлĕ халăхăн наци çи-пуçĕ», «Халăхсен сăпка юррисем», «Чăваш Енри тĕрлĕ халăхăн уявĕсемпе йăли-йĕрки», «Чăваш Енри тĕрлĕ халăхăн юрри, сăвви тата ташши», «Наци эксклюзивĕ», «Çемье альбомĕ».

Çурла уйăхĕн 27-мĕшĕнче Çĕнĕ Шупашкарта асăннă проекта пурнăçланă май черетлĕ уяв – «Чăваш Енри тĕрлĕ халăхăн наци пуянлăхĕ» фестиваль – иртнĕ. Унта ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьевпа унăн мăшăрĕ Лариса Юрьевна, Чăваш Енри Хĕрарăмсен союзĕн председателĕ Ольга Зайцева, ЧР сывлăх министрĕ Алла Самойлова, сумлă ытти хăна хутшăннă.

– Паян Çĕнĕ Шупашкар çыннисемпе хăнисене эпир Хĕрарăмсен союзĕн районсенчи тата хуласенчи уйрăмĕсен чи сумлă та пархатарлă ĕçĕсемпе паллаштаратпăр, – тенĕ Светлана Юрьевна.

Çавна май Çĕнĕ Шупашкарти пасар умĕнче пысăк лапам ĕçленĕ. Унта пахчаçăсен, халăх промыслине кăмăллакансен ĕçĕсемпе паллашма май килнĕ. Республикăра пурăнакан тĕрлĕ халăх тумне ятарлă дефилере кăтартнă. Йăла-йĕркене упракансем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарнă. Хăнасем тĕрлĕ наци апатне тутанса пăхма пултарнă.

**Татьяна НАУМОВА.**

# «Ылтăн» та «кĕмĕл»

Çурла уйăхĕн 25-мĕшĕнче Болгарире шашкăпа выляссипе çамрăксен первенстви уçăлнă. Ăмăртăва хутшăнакансен йышĕнче Чăваш Ен маттурĕсем те – ачасемпе çамрăксен «Энергия» спорт шкулĕн воспитанникĕсем Даниил Леонидовпа Артем Тихонов – пур. Кунтах ветерансен хушшинче тĕнче чемпионачĕ иртнĕ май ăмăртăва 17 çĕршывран 250 ытла спортсмен пухăннă.

Çамрăксен хушшинче хăвăрт, питĕ хăвăрт тата классика программисенче вăйлисене палăртаççĕ. Чăваш Ен спортсменĕсем ĕнерхи кун тĕлне пилĕк медаль илме пултарнă. Артем Тихонов 2008 çулччен çуралнисен хушшинче виçĕ хутчен чемпион пулса тăнă. Вăл шашкăн виçĕ тĕрлĕ программинче те «ылтăна» тивĕçнĕ.

Даниил Леонидов та ăнăçлă вылянă. 2000–2002 çулсенче çуралнисен хушшинче вăл вырăс шашкин хăвăрт вăййинче малти пулса тăнă. Питĕ хăвăрт программăра /вырăсла «молниеносная» теççĕ/ вăл «кĕмĕле» тивĕçнĕ. Унăн тата классика мелĕпе выляма тивет.

**Татьяна НИКОЛАЕВА.**

# «Патриотлăх туйăмĕ çуратакан кино кирлĕ»



Иртнĕ шăматкун ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев мăшăрĕпе Лариса Юрьевнăпа Çĕнĕ Шупашкар хула кунне паллă тунă май ирттернĕ мероприятисене хутшăннă. Элтеперĕмĕр хула çулран çул илемленнине, пурăнма хăтлăланнине палăртнă. Кунта çул-йĕр те, ытти инфраструктура та аталанать. Çĕнĕ производствăсем усăллă май пысăк технологиллĕ ĕç вырăнĕсем те тупăнаççĕ. Хулан социаллă аталанăвне хăйсен тӳпине хывнăшăн çак тăрăхра пурăнакансене тав тунă вăл.

Михаил Васильевич Çĕнĕ Шупашкар хулин пасарĕн ĕçĕпе те паллашнă. Хула ертӳлĕхне сыннсене ял хуçалăх продукцине тӳрремĕн сутма майсем туса памаллине аса илтернĕ.

Уява хутшăннă май Михаил Игнатьев профессисен ачасен «Делоград» хулипе паллашнă. Ăна ачасен пултарулăхĕпе çамрăклăхăн центрĕ йĕркеленĕ «Манăн ĕмĕтри професси» фестиваль иртнĕ май йĕркеленĕ, унта интерактивлă тĕрлĕ лапам ĕçленĕ. Кунтах Центра çӳрекен ачасен ал ĕçĕн куравĕпе паллашма май килнĕ. Вĕсене ЧР Пуçлăхĕ пысăк хак панă.

Çак кунах химиксен хулинче «Сывлăх сыхлавĕн ылтăн фончĕ» Хисеп хăми уçăлнă. Унта хулари чи лайăх 28 медицина ĕçченĕн сăнĕ вырăн тупнă.

– Çак ĕçĕн чи паха енĕ – çынсен ĕмĕрĕ вăрăмланни, çĕр çул ытла пурăнакансем йышланни, сывă ачасен шучĕ ӳсни, – тенĕ Михаил Васильевич.

Михаил Игнатьев ытти мероприятие те хутшăннă, Çĕнĕ Шупашкарсене уяв ячĕпе саламланă.

* * *

Ытларикун Михаил Игнатьев Улатăра çитнĕ. Хулари Стрелоксен 141-мĕш дивизийĕн урамĕнчи автоçулăн капиталлă юсавĕ епле пынипе паллашнă. «Лабиринт» суту-илӳ центрĕнче «Космос» кинотеатр усăллă çĕре те хутшăннă. Улатăрсемшĕн ку пысăк парне пулса тăнă, унта 3500 çын кино курма пынă та ĕнтĕ.

Кино çулталăкĕнче республикăра халиччен Канашра тата Çĕмĕрлере кино залĕсем уçăлнăччĕ.

– Паян кино çамрăксемшĕн те, çитĕннисемшĕн те кăсăклă. Çĕршыв историйĕ çинчен калаканнисем, патриотлăх туйăмĕ вăратаканнисем ытларах кирлĕ пире, – тенĕ Михаил Васильевич.

ЧР Пуçлăхĕ хула ертӳлĕхĕпе – Николай Зайкинпа тата Александр Седовпа – тĕл пулнă. Муниципалитетăн демографи лару-тăрăвне, сынсене юхăннă çуртсенчен куçарасси еплерех пурнăçланнине тĕпченĕ. Ĕçлĕ тĕлпулура ытти ыйтусене те пăхса тухнă.

Çак кунах вăл Улатăр районĕнчи Чуварлей ялĕнчи карантин постĕнче канашлу иртнернĕ. Сыснасен Африка мурне пĕтерес ĕç-пуç тавра калаçнă.

Ку амакран хăтăлма ЧР Финанс министерстви 23 млн 403 пин тенкĕ уйăрнă. Вĕсенчен 18 млн 239 пин тенке халăха вылăх-чĕрлĕх пуçтарса илнĕшĕн тăкаксене саплаштарма памашкăн уйăрнă.

* * *

Çурла уйăхĕн 31-мĕшĕнче Михаил Игнатьев Шăмăршă районне çитнĕ. Кунта вăл автоçул тăвакан-юсакан, шыв пăрăхĕсем хуракан предприятире пулнă, продукци пахалăхне палăртнă.

Шăмăршă район пуçлăхĕпе Менир Хамдеевпа ĕçлĕ тĕлпулу иртнĕ. Ял хуçалăх, нумай хваттерлĕ çуртсен юсавĕ, малашнехи аталану çул-йĕрĕ тавра калаçнă. Çĕнĕ производство усас кăмăллă предпринимательсене «симĕс çутă» парассипе малашне те йĕркеллĕ ĕçлеме суннă.

**Анна НИКОЛАЕВА.**

СЪЕЗД

# Чăваш Ен – хăтлă регион

*Чăваш Енре пурăнакансем авалтан йăхнесĕлĕн йăли-йĕркине тытса пыраççĕ, культурине аталантараççĕ. 2010 çулхи çырав пирĕн тăрăхра 128 тĕрлĕ наци çынни тата этника 8 ушкăнĕ пурăннине çирĕплетрĕ. Кăçалхи авăн уйăхĕн 2-мĕшĕнче республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Енре пурăнакан халăхсен съездне иртттермелли пирки хушăва алă пусрĕ. Вăл авăн уйăхĕн 10-мĕшĕнче Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче 10 сехетре пуçланĕ.*

*Çакăнта Чăваш Республикинче кăна мар, çĕршывĕпех тĕпленнĕ халăхсен культурине, чĕлхине, йăли-йĕркине упраса хăварассине сыхăннă ыйтусем тавра калаçĕç. Халăхсен ассамблейине туса хурассине кун йĕркине кĕртнĕ. Çак тĕлпулу халăхсен хушшинчи туслăха çирĕплетме пулăшĕ.*



**Вячеслав ОРИНОВ, ЧР культура министрĕн çумĕ:**

– Съезда районсемпе хуласенчен 650 делегат хутшăнĕ. Ку ĕçе республикăри нацие культура пĕрлешӳвĕсем пуçарчĕç. Вĕсем 34-ăн. Çак йышăн сĕнĕвĕсене шута илсе малашнехи ĕçе пĕрле йĕркелесе пырăпăр.

Халăхсен ассамблейи ытти тăрăхра ĕçлет. Пирĕн те ку ыйтăва кая хăварма юрамасть. Каярах Халăхсен туслăх çуртне туса хурасси пирки те калаçăпăр.



**Иван БОЙКО, Чăваш патшалăх гуманитари наукисен институчĕн тĕп сотрудникĕ:**

– Съезд çивĕч пур ыйтăва та татса параймĕ, çапах тĕрлĕ наци çыннисен шухăшне пĕр тĕвве пуçтарма пулăшĕ. Ырă малашлăха шанмалла паллах.

Тĕрлĕ наци халăхне пĕр çĕре пуçтарăнма май туса памалла. Çакă хисеп тунине пĕлтерет. Халăхсен туслăх çуртĕнче, тĕслĕхрен, темиçе нацие пĕр пӳлĕм уйăрса пама пулать.



**Акоп ПОГОСЯН, Чăваш Республикинчи «Раççейри эрменсен союзĕ» организаци ертӳçи:**

– Пире кунта, чăнах, хăтлă. Кама та пулин юрассишĕн каламастăп çакна, ку – пурнăç чăнлăхĕ. Чăваш Республикинче пурăнакан эрменсене тахçантанпах пĕр шухăш канăçсăрлантарать. Пирĕн йыша 10 сотка çĕр уйăрса парсан тем пекехчĕ. Унта чиркӳ хăпартса лартăттăмăр, вырсарни шкулĕ уçăттăмăр. Çамрăк ăрăва хамăрăн историе тĕплĕнрех вĕрентес килет. Ытти – йăлтах пур.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Тен, пирĕн ачара гени пытаннă...

**Татьяна НАУМОВА**

**«Часах! Часах! Часах! Раççейри кашни çуртрах! Килти ĕçсене пурнăçланă... Амăшĕн сасси çĕтнĕ... Ачисен хăлхи илтми пулнă... Кӳршĕсем килти ĕçе пăхмасăр вĕреннĕ, йытă каласа панă! Эх, часах вĕсем – ашшĕ-амăшĕн пухăвĕсем – пуçланаççĕ: тӳлевсĕр кĕртеççĕ, укçалла кăлараççĕ... Вĕренӳ çулĕ амăшĕсемшĕн ача кĕтнĕ пекех – 9 уйăх тăсăлать. Иккĕмĕш эрнеренех кăмăл пăтранма тытăнать. Амăшĕсем, çывхарса килекен çĕнĕ вĕренӳ çулĕ ячĕпе сире! Ăнăçупа чăтăмлăх!» – вулатăп Интернетри пĕр шӳте.**

**Кулăш – кулăшах, йăл кулă çуратать, çав вăхăтрах шухăша та ярать. Ăна вуланă май тепри аса килет: «Ачапа килти ĕç хатĕрленĕ май хам шкулта вĕренмен пекех туйăнма тытăнать».**

**Çапла, вĕренӳ программи çулсерен кăткăсланса пырать. Анчах çакна тиркеме те кирлех мар-тăр: çĕнĕ технологисем кунран-кун аталанса пынă май ача ăс-хакăлĕ те çирĕпленсех пымалла-çке. Аслă поэтăмăр Çеçпĕл Мишши те хастарлă та хыт утăмлă пулса, вут-кайăклăн вĕçсе кун-çул уттинчен юлма хушман. Тăрăшатпăр-ха. Малтан-мала таллăнма хăтланатпăр. Аптрамастпăр. Пурнăçăн ку е вăл енĕпе пĕрлех вĕренӳ тытăмĕнче те çитĕнӳсем тăватпăр.**

**Мухтанмалли, каласа кăтартмалли аслисен йышĕнче те, кĕçĕннисен хушшинче те, телее, сахал мар. Чăваш Ен вĕрентекенĕсем çулран-çул ку е вăл ăмăртура палăраççĕ, хисепе тивĕçеççĕ. Вăтам е аслă шкулта ăс пухакан хĕр-упраçпа яш-кĕрĕмĕр те республика чысне çĕре ӳкермест, питĕмĕрсене хĕретмест.**

**Çакна иртнĕ эрнере пирĕн республикăра хăнара пулнă РФ Патшалăх Думин Вĕренӳ комитечĕн председателĕ Вячеслав Никонов та çирĕплетнĕ. «Чăваш çĕрĕ çинче пĕрремĕш класлă вĕренӳ учрежденийĕсем ĕçлеççĕ. Вĕрентӳ тытăмĕ те чаплă. Пысăк çĕнĕ проектсем те пур. Çакă кунта ăс-хакăл енчен мăнаçлă потенциал пуррине, вăл хăватлăн аталанма пултарнине çирĕплетет», – тенĕ вăл.**

**Паллах, ывăл-хĕре шкула пуçтарса яма паян çав тери тăкаклă. Чылайăшĕн кăмăлне çакă пусарать те. Çи-пуçĕ, шкул хатĕрĕсем, сумка... Çитес çул ачине пĕрремĕш класа яма хатĕрленекен пĕлĕшĕм – пĕччен амăшĕ – халех пуç ватма тытăннă ĕнтĕ. Ĕç тетрачĕсем те мĕн хак-çке! Çăмăл мар паллах. Апла пулин те пурăнатпăр-ха, пуçа усмасăр малашлăха пăхатпăр.**

**Ачасене вĕренме, тĕрлĕ енлĕ аталанма мĕнпур май туса парассишĕн республика ертӳлĕхĕ те нумай тăрăшать. Çĕнĕрен-çĕнĕ программăсене пурнăçа кĕртеççĕ. Вĕрентекенсен çулсерен çурла уйăхĕнче иртекен пысăк конференцийĕнче ЧР Пуçлăхĕ Чăваш Енре вĕренӳ тытăмне çĕнетсе аталантарма пысăк тимлĕх уйăрнине, çавна май çирĕплетнĕ бюджетăн виççĕмĕш пайĕ шăпах çак отрасле кайнине каланă. Кăçал çак тытăмри тĕрлĕ ĕçе пурнăçлама 14 млрд. 758 млн тенкĕ уйăрнă иккен.**

**«Пĕрле пурăнмалла – пĕрле хăпартмалла!» халăх программипе 2025 çулччен республикăра 32 шкул тумалла, реконструкцилемелле. Çывăх вăхăтра «Волжский-3» микрорайонта çĕнĕ пĕлӳ çуртĕн никĕсне хывмалла. Республика пĕлтерĕшлĕ кадет шкулне çĕклемелле. Хальхи вăхăтра Гладков урамĕнче 1100 вырăнлă шкул хăпарать, наци лицейĕ пулнă çуртăн капиталлă юсавĕ пырать.**

**Çамах май, вĕренӳ учрежденийĕсем уçасси – Раççейĕпех анлă сарăлнă тĕллев. Кăçал кăна 92 çĕнĕ çурт хута каймалла. Çапла тума демографи лару-тăрăвĕ те хистет. Хальлĕхе шкул парти хушшинче 13 миллион ача ларать, вунă çултан вĕсен йышĕ 16,5 миллионпа танлашĕ. Çав вăхăтрах нумай шкул паян икĕ сменăпа ĕçлет-ха.**

**Вĕрентӳ тытăмĕнчи Раççейри çĕнĕлĕхсем çинчен те калас килет. Мускавра паян ачасене професси енĕпе тĕллевлĕ хатĕрлесси вăй илсе пырать. Малтанласа гуманитари е математика класĕсем кăна пулнă, халĕ медицинăпа çыхăнни те пур. Нумаях пулмасть çак тĕллевпе çĕршывăмăрăн тĕп хулинчи 62 шкула медицина тĕрлĕ хатĕрĕпе тивĕçтернĕ. Занятисем аслă шкултинчен чылай çăмăлрах иртĕç, анчах медицина класĕнче вĕренекенсем хăйсене чăн-чăн тухтăр вырăнĕнчех туйма пултарĕç. Вăхăт иртнĕ май ку çĕнĕлĕх пирĕн тăрăха та çитĕ-ха.**

**Чăваш Енре парта хушшинче ларакансемшĕн çеç мар, шкул çулĕнченхи ӳсĕмрисем валли те нумай енлĕн аталанма çĕнни çуралсах пырать. Ахальтен мар кĕçĕннисене вĕренӳ процесне явăçтарассипе Раççейре малтисен йышĕнче эпир. Мĕн пĕчĕкрен пахалăхлă вĕрентессишĕнех малашне ача сачĕсенче тăрăшакансен квалификацине ӳстерессине те пысăк тимлĕх уйăрма палăртаççĕ çӳлтисем.**

**Паянхи куна республикăра – 999 вĕренӳ организацийĕ. Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче вĕсенчен иккĕшĕнче – Шăмăршă районĕнчи Пашьелти тата Çĕмĕрлери 2-мĕш вăтам шкулсенче – урока йыхравлакан шăнкăрав янрамарĕ. Çакă кунта тĕплĕ юсав вĕçленменнипе çыхăннă. Ачасене хальлĕхе автобуссемпе кӳршĕ яла илсе çӳрĕç. Çамах май, Дмитрий Медведев премьер-министр хушăвĕпе килĕшӳллĕн, кăçал Чăваш Ене 16 çĕнĕ транспорт килмелле.**

**Экономикăри паянхи йывăр лару-тăрура, паллах, ашшĕ-амăшне ачисене шкула хатĕрлесе яма çăмăл мар. Апла пулин те йăх тăсăмне тĕрлĕ майпа усă курса аталанма, çивĕчленме майсем тупса парасчĕ. Тен, шăпах пирĕн ачара гени пытаннă?**

КИЛ ĂШШИ

# «Ачасемсĕр пурнăçра çутă сăрăсем çитмĕччĕç»

Çĕмĕрле районĕнчи Турханта 227 çемье пурăнать. Вĕсенчен 8-шĕ пысăк йышпа савăнать.

Ирина Скрипкова та – нумай ачаллă амăшĕсен ретĕнчен. Нумаях пулмасть – кĕçĕн ывăлĕ 1 уйăхра çеç-ха – вăл пиллĕкмĕш хутчен анне пулса тăнă. Артемтан епле уйăрас? Çĕр уйăртăмăр. Ватлăхра пăхакан та кирлĕ-çке. Хальлĕхе мунчине те хамах хутаятăп-ха, лавкка тавраше те тухаймастăп вара – утаймастăп. Кӳрше те каçман. Кил хушшинче çеç кĕштĕртетсе çӳретĕп çапла, – калаçăва хутшăнать Ирина хунямăшĕ Елизавета Андреевна.



сăр пусне Ксюша, Володя, Слава тата Ангелина çитĕнеççĕ. Ангелина хĕр кĕтнĕ-ха та... халĕ вара шăллĕ тупăннишĕн те савăнать, ăна никама памасса систерет.

Çак ялтах çуралса ӳснĕ Ирина, пĕр урамран теприне çеç качча килнĕ. Мăшăрĕн Мишăн тĕп килĕнчех тĕпленнĕ вĕсем. Çĕнĕ пӳрт лартнă-ха, анчах вăл ашшĕпе амăшĕн çурчĕпе юнашарах, пĕр çĕр лаптăкĕ çинчех. 2004 çулта çĕкленĕ ăна. Ялта пурăнакан çамрăк специалистсене тивĕçекен пулăшупа та усă курнă çемье. Ун чухне кил хуçи колхозра механизаторта тăрăшнă. Халă вăл – социаллă ĕçчен.

Паллах, паянхи кун кашниех пилĕк ача çуратма хăюлăх çитереймест. Скрипковсем – хăраман. Çамрăксем ялта юлма та шикленмен, ара, паян чылайăшĕ хулана туртăнать те. Çурта пĕр ача хыççăн теприн уçă куллипе тултарса пуянлатма та ӳркенмен.

– Мăшăр лайăх, япăххипе кун чухлĕ çуратас çук. Тепĕр енчен, эпĕ пĕччен çитĕннĕ – пысăк йыш пирки ачаран ĕмĕтленнĕ. Малтанах виççĕ çинче чарăнма та шухăшланăччĕ. Тăваттăмĕшне «туянсан» пиллĕкмĕшĕ те кирлех пек туйăнчĕ, – тет Ирина Вячеславовна. – Ялта хăнăхнă та кунтах лайăх. Вăрман та юнашар. Пĕр-пĕринпе хирĕçес пулсан та кӳршĕсем илтмеççĕ, – шӳтлет хĕрарăм.

Эпир пынă чухне амăшĕ аслă ачисемпе пахчана утă пуçтарма тухнăран «çĕнĕ кайăка» асламăшĕ пăхатчĕ. Сакăрвунна кайнăскерĕн 9 мăнук, 3 кĕçĕн мăнук çитĕнет. Усрава илнĕ висĕ мăнук та пур.

– Юратаççĕ ачасем, килсех, «мамаклатсах» тăраççĕ. Пурне те укçа кирлĕ тата: пĕрисем вĕренеççĕ, кусем стройка тăваççĕ...

Валентин Алексеевичпа Елизавета Андреевна аллă çул ытла пĕрле пурăннă. Шел, упăшки çĕре кĕнĕ.

– Мăшăрпа питĕ килĕштереттĕмĕр. Вăрçăнман та, ятлаçман та, хирĕçмен те. Пĕр-пĕрне яланах ăнланнă. Паллах, ачасене те хамăр пек юратса пурăнма вĕрентнĕ, – тет хĕрарăм. – Иккĕмĕшпе виççĕмĕш ывăлсен хушши – тăхăр çул. Малтанах кĕçĕннине çуратма та шухăшламан. Ун чухне çамрăксем хулана тухса кайма пуçларĕç. «Валька, ачасем хулана тухса кайсан иксĕмĕрех юлатпăр вĕт, тепре çуратар пуль», – тесе сĕнтĕм. Çапла тепре шырама кайрăмăр. Ку та ывăл пултăрах теттĕм.

Елизавета Андреевнăпа Валентин Алексеевич мăшăрланичченех висĕ çул туслă çӳренĕ. Паллах, ачисем те ашшĕпе амăшĕ пĕр çăвартан еплерех пурăннине курса çитĕннĕ, вĕсене тĕслĕх вырăннех лартнă. Мишăпа Ирина та нумай çул туслă çӳренĕ. Çепĕç туйăм хĕмленме пуçланă самантра хĕр 7 класра вĕреннĕ, йĕкĕт салтакран таврăннă. Сакăр çултан ăшă йăва çавăрнă вĕсем.

## Ятлаççан та – çураçмалла

Нумай ачаллă амăшĕ икĕ çул каялла менеджер-экономист дипломне илнĕ. Чулхулара куçăмсăр майпа ултă çул вĕреннĕ вăл. Шкул пĕтерсенех качча кайнăскер икĕ пепкине кун çути парнелесен çеç аслă шкула туртăннă.

2002 çулта пĕрлешнĕ Иринăпа Миша. Кинĕпе хунямăшĕ вун пиллĕкмĕш çул ĕнтĕ юнашар.

– Çамрăксене вĕрентме те тивет. Шкул хыççăнах качча килчĕ те нумай ĕçе хăнăхтарма тиврĕ. Пĕр пӳртре икĕ çул юнашар пурăнтăмăр. Ятлаççан та çураçма пĕлмелле. Пĕрле пурăнмалла вĕт. Аслă ывăлсем иккĕшĕ те хамăр урамрах тĕпленчĕç, кинсем те килсех çӳреççĕ. Кĕçĕннине хамăр пăр вĕт», – тет. Чăнах ĕлкĕрейместĕмĕр. Кайран хушăран «кайса курас килетчĕ» тесе ӳпкелетчĕ мăшăрăм. Укçи-тенкине те малтанах хатĕрленĕ ĕнтĕ, пурана хăпартсанах кăмака тутартăмăр. Тата кăштах пурăнмаллаччĕ те Валькăн, утнă çĕртех ӳксе вилчĕ. Юн пусăмĕ хăпаратчĕ çав, – ассăн сывларĕ хĕрарăмсенчен асли.

## Килĕшӳ – хĕрарăмра

– Хунямапа çулталăк пурăнсан йывăç кивĕ пӳрт илсе уйрălса тухрăмăр. Йĕритавра стройка пуçларăмăр. Йывăçран пураланă хуралтăсем çĕрсе пĕтрĕç ĕнтĕ. Çурта та 1975 çултах лартрăмăр. Нушине курнă-ха. Шăрăх пулчĕ вăл çул. Урпа шит тăршшĕччĕ, йĕри-тавра вăрман çунатчĕ. Çурла уйăхĕнче лартма пуçларăмăр пӳрте, çав çулах кĕтĕмĕр. Колхозра тырă пухса кĕртсен Валькăна комбайнпа рис вырма Пермь облаçне илсе каясшăнччĕ. Хуняма калать: «Ан яр, унсăрăн пӳрт лартаймастпăр вĕт», – тет. Чăнах ĕлкĕрейместĕмĕр.

– Пĕлтĕр вите тума пуçларăмăр та кăçал çеç вĕçлерĕмĕр, халĕ выльăх усрас тетпĕр. Çур çулти пăру çитĕнет, унран ĕне тумалла, – пĕлтерчĕ Ирина.

Пурнăç епле пуласси те, çемьери килĕшӳ те чи малтанах хĕрарăмран килнипе килĕшеççĕ ку килте.

– Хăть те хăçан та ларса калаçса, канашласа ĕçлетпĕр. Пĕр-пĕрне ăнланма тăрăшатпăр. Аттепе аннене пысăк тав паллах – нумай пулăшрĕç. Вĕсемсĕр алă-урасăр пекех. Кӳршĕсем те лайăх. Администрацири ертӳçисем те сĕнӳ-канашпа пулăшсах пыраççĕ, – ялти пурнăçпа кăмăллине уççăнах палăртрĕ уйрăлнă май нумай ачаллă амăшĕ.

## Пысăк та яваплă утăм

Турханти Кадеровсем те – нумай ачаллисен йышĕнчен. Татьяна Николаевнăпа Сергей Никитич Гришăпа Никитăна çуратнисĕр пуçне çемье ăшшине Оксанăна, Димăна тата Аньăна парнеленĕ, висĕ ачана хăйсен хӳттине илнĕ.

– Ку çирĕп шухăш, паллах, çăмăллăн килмест. Вăйă мар-çке. Шухăшласан-шухăшласан ку утăм валли пиçсе çитрĕмĕрех. Гриша та çăмăллăнах йышăнчĕ ку хыпара. Никитăна ăнлантарма йывăртарахчĕ. Кĕçĕнни пулнă май тетте пайлас килмерĕ-ши? Халĕ питĕ туслă вĕсем, – тет нумай ачаллă амăшĕ.

рăшать, мăшăрĕ кил ăшшине упрать. Анат Кăмаша хĕрĕпе Турхан каччи хĕр йĕкĕтсен ялне хăнана килсен паллашнă. Ун хыççăн Татьяна Сергее салтака ăсатнă, кĕтсе илнĕ. Çулталăкран, 1997 çулта, пĕрлешнĕ. Тата çулталăкран чăвашсен йăлипе Сергейпа Татьяна тĕп килтен уйрăлса тухнă.

Амăшĕ çĕре кĕнĕрен 7 пĕртăвана Сергей ашшĕ пĕччченех ӳстернĕ иккен. Мăнукĕсене ура çине тăратма ывăлне амăшĕ пулăшнă.

Татьяна вара – тăватă ачаран виç çĕмĕшĕ. Амăшĕ хĕрĕ усрав ача илессе епле йышăннă-ши? Йĕркеллех-мĕн. Таня умĕн аппăшĕ Надя ку утăма тума пиçсе çитнĕ. Вăл тăватă ывăл-хĕре çемье ăшши парнеленĕ. Аппăшĕн тĕслĕхĕ те хавхалантарнă йăмăкне, амăшĕ Зоя Алексеевна та чарман.

– Ачасем ăна «кукамай» тесе çеç тăраççĕ, – тет Татьяна Кадерова. – Ачасем пĕр-пĕринпе туслă çитĕнеççĕ. Никитăпа Оксана пĕр класрах вĕренеççĕ-çке, урок та пĕрлех тăваççĕ. Ытларах Оксана Никитăна пулăшать. Димăна та пăхса тăрать вăл. Гриша та шăллĕ-йăмăкĕпе лайăх хутшăнура. Гриша Оксанăшăн идеал-пичче шайĕнчех. Çакна ялан калать. Ăшшишĕн, лайăх хутшăннишĕн пулĕ.

Малтанхи вăхăтра тĕрĕсех турăмăр-ши тесе шухăшланă самантсем те пулнă. Йывăрлăх сахал мар. Кашнин хăйĕн кăмăлсипечĕ тата. Çав вăхăтрах – хамăрăн опыт çитменни те. Халĕ хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ. Вĕсемсĕр пурнăç та пушă, тĕксĕм пулĕччĕ, çутă сăрăсем çитмĕччĕç, – пытармасть ырă кăмăллă та ăшă кулăллăскер.

Хĕрарăмăн тĕп тивĕçĕ – анне пуласси. Унăн ачисене юратмалла, вĕсене çемье



Аслă ывăлĕ Гриша 19-та ĕнтĕ, тăваттăмĕш курс студенчĕ. Никитăна Оксана вуниккĕре, пĕр класрах вĕренеççĕ. Аня та вĕсен ӳсĕмĕнчех, анчах вăл Саланчăкри коррекци шкулĕнче вĕренет.

– Çемьене малтанах Димăна илсе килтĕмĕр. Ун чухне вăл виççĕречче, унтанпа çичĕ çул иртрĕ. Çулталăкран Оксанăна илтĕмĕр. Вăл Димăн аппăшĕ иккенне малтан пĕлмен те. Урăх çемьере пурăннă вăл, анчах хĕрачана каялла тавăрнă. Эпир пĕртăвансене уйăрас мар терĕмĕр, çавăнпах хамăр пата йышăнтăмăр. Аньăшăн пирĕн кил алăкĕ икĕ çул каялла уçăлчĕ, – паллаштарчĕ çемье историйĕпе Татьяна Николаевна.

Çемье пуçĕ электрогазосварщикре тăăшшине туйма пур май туса памалла.

– Ачасене хăтлă тесе шанатăп. Вĕсем шкултан тухсан та киле васкаççĕ-çке, – чунне уçать хĕрарăм.

Кадеровсем пĕрле усăлса çӳреме кăмăллаççĕ. Хĕлле пурте туслăн йĕлтĕр сыраççĕ. Çулла ачисем ашшĕпе пулла çӳреме юратаççĕ. Шел, çуллахи вăхăтра командировкăсене час-час çӳренĕрен вăл сывăх çыннисемпе канмалли кунсене çеç ирттерет. Спортпа та туслă вĕсем. Ывăлĕсем футбол кăмăллаççĕ. Хĕрсем вара вĕтĕ шăрçаран илемлĕ япаласем ăсталама хăнăхаççĕ.

**Татьяна НАУМОВА.**

Автор сăнӳкерчĕкĕсем.



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Кăмпа «вăлчи»



**1 килограмм вăрман кăмпи, 400 грамм помидор, 200 грамм сухан, тăвар, пăрăç, тип çу кирлĕ.**

Пĕçернĕ кăмпана аш арманĕ витĕр кăлармалла. Сухана турамалла, помидора çаврашкан касмалла. Пахчаçимĕçе тип çупа ăшаламалла, кăмпа, тăвар, пăрăç хушса 10 минут пăшăхламалла. Кăмпа хутăшне таса банкăсене тултармалла. Савăта 45 минутлăха вĕрекен шыва лартмалла.

### Чăх пĕверĕпе çĕрулми

**500 грамм чăх пĕверĕ, 700 грамм çĕрулми, пуçлă 1 сухан, 100 миллилитр соя соусĕ, тăвар, пăрăç, тип çу кирлĕ.**

Вĕттĕн туранă пĕвере соя соусĕпе пăтратмалла, 30-40 минутран сăрхăнтармалла. Вĕтетнĕ сухана тип çупа ăшаламалла, пĕвер хушмалла.

Пĕрчĕлесе каснă çĕрулмие ăшаламалла, вĕрилле пĕверпе пăтратмалла.

### Печени

**Чуста çăрма 4 стакан çăнăх, 100 грамм услам çу, 2 çăмарта, 1,5 стакан сахăр, 2 апат кашăкĕ хăйма, 1/2 чей кашăкĕ апат соди, 1 апат кашăкĕ лимон сĕткенĕ кирлĕ.**

**Ăшне хума 1 стакан хăйма, 1 стакан сахăр, 1/2 стакан аçтăрхан мăйăрĕ хатĕрлемелле.**

Çăмартана сахăрпа пăтратмалла, услам çу, хăйма, апат содипе лимон сĕткенĕ, çăнăх хушмалла. Çемçе чустана 30 минутлăха сивĕтмĕше хумалла.

Чустана пĕрешкел 24 пая касмалла. Çурма çаврашкасем туса духовкăра 15 минут пĕçермелле. Вĕрилле лапчăннă енчен ăшне кăлармалла. Печение сивĕтмелле.

Хăймапа сахăра пăтратмалла, печенин касса кăларнă пайне хушмалла, вĕтетнĕ аçтăрхан мăйăрĕ ямалла. Çак хутăша печени ăшне тултармалла, икĕ çур пая пĕрлештермелле.

### Шăккалат кексĕ

**100 грамм шăккалат, 100 грамм услам çу, 160 грамм сахăр, 100 грамм çăнăх, 1 чей кашăкĕ кăпăшлантаракан хутăш, чĕптĕм ванилин, 1/4 чей кашăкĕ тăвар, 3 апат кашăкĕ какао, 4 çăмарта кирлĕ.**

Шăккалатпа услам çăва ирĕлтермелле. Çак хутăша сахăрпа, çăнăхпа, кăпăшлантаракан хутăшпа, ванилинпа, тăварпа, какаопа пăтратмалла, çăмарта хушмалла.

Чустана фольга сарнă çатмана ямалла. Шăккалат кексне духовкăра 30 минут пĕçермелле.

### Пицца

**Чуста çăрма 0,5 литр турăх, 1 çăмарта, 1/2 апат кашăкĕ типĕ çĕпре, 60 грамм услам çу, тăвар, 2,5-3 стакан çăнăх кирлĕ.**

**Ăшне хума 200 грамм ветчина, тăварланă 2 хăяр, 100 грамм сыр, укроп, кетчуп хатĕрлемелле.**

Ăшă турăха çĕпрепе, çăнăхăн çур пайĕпе пăтратмалла. 30 минутран çăмарта, услам çу, тăвар, юлашки çăнăха хушса чуста çăрмалла, хăпариччен кĕтмелле.

Чустана йĕтĕрлесе çатмана хумалла. Кетчуп сĕрмелле. Çаврашкан туранă хăярпа помидор, пĕрчĕлесе каснă ветчина, вĕтетнĕ кăмпа хумалла. Çиелтен теркăланă сыр сапмалла.

Пиццăна 30 минутлăха духовкăна лартмалла. Вĕрилле вĕтетнĕ укроп сапмалла.

### Купăстапа ветчина

**0,5 килограмм купăста, 200 грамм ветчина, 200 грамм сыр, 2 çăмарта, 1 стакан сĕт, 3 апат кашăкĕ çăнăх, 2 апат кашăкĕ услам çу, тăвар, вĕтетнĕ сухари кирлĕ.**

Купăстана тăварлă вĕрекен шыва 3 минутлăха ямалла. Çăмарта саррипе шуррине уйăрмалла.

Çăнăха услам çупа ăшаламалла, сĕт ярса вĕретмелле, теркăланă 150 грамм сыр, тăвар хушмалла. Çак соуса пĕрчĕлесе туранă ветчинапа, купăстапа, çăмарта саррипе хутăштармалла. Юлашкинчен пăтратса кăпăклантарнă çăмарта шурри ямалла. Хутăша вĕтетнĕ сухари сапнă çатмана тултармалла. Çиелтен юлашки сырпа витмелле. Купăстапа ветчинана духовкăра ылтăн тĕс çапиччен пĕçермелле.

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

## Хăмла çырли



Хăмла çырлине те хĕле хатĕрлемелле. Çак тĕллевпе хунавсене касмалла.

Малтан хăмла çырли еплерех ÿснине пĕлмелле. Унăн тымарĕ нумай çул аталанать, туратти – икĕ çул. Малтанхи çул вăл тымартан тухать, аталанать, çирĕпленет. Иккĕмĕш çулхине ку турат çырла парать. Тухăç турат малтанхи çул вăй мĕнле пухса çитернинчен килет. Виççĕмĕш çул турат типме тытăнать, ун çинче çырла та вĕтелет. Тымар вăйне вара çак турат ыттисемпе танах ĕмет.

Кĕркунне хăмла çырлине пухсанах тĕме шелсĕррĕн иртме юрать. Кивĕ тата чирлĕ туратсене касма ан иккĕленĕр. Хуçăлнă туратсене, имшер хунавсене те иртмелле. Пĕр тĕм çинче 6–8 лайăх турат хăвармалла. Енчен те эсир ăна куçарса лартма хатĕрленетĕр тăк – ытларах, пайламалăх пултăр.

Туратсене тымар тĕлĕнчен, çĕр çумĕнчен касмалла. Унсăрăн тунката çине сăтăрçăсем пухăнаççĕ. Чирлĕ çулçă-турата сăтăрçăсенчен сыхланса тÿрех çунтарсан та аван. Тĕм таврра çĕре чавса туxсан, апатлантарсан лайăх.

ШУТА ИЛМЕ

## Хĕлле те панулми çиес тесен

Панулмие май пур таран ытларах упрас килет. Апла тăк ăçта хумалла ăна?

Пиçсе çитнĕ çимĕç валли сулхăн е сивĕ вырăн уйăрмалла. Хĕллехи сортсем хăйсен пахалăхне 0 градусра çухатмĕç. Сывлăш нÿрĕкĕ 85-95 градус пулмалла. Управри купăста, сухан, пăнтăх шăрши уншăн сиенлĕ.

Ĕлĕк панулмин хĕллехи сорчĕсене пăр е юр айĕнче тытнă, унта яланах пĕрешкел температура пулнă, мĕншĕн тесен кăшт ăшăтсанах çимĕç нÿрелет те çĕрме пуçлать.

Вăрах упрамалли панулмие шалти турат çинчен татмалла. Хĕрелнине мар, симĕссине суйламалла. Кашнине уйăммăн ăвăсланă хутпа чĕркемелле. Ещĕке хунă чухне панулми хуппине сиенлеме юрамасть.



Çимĕçе полиэтилен çатăркана та тултарма пулать, сывлăш кĕресрен çыхмалла.

ЧĂХ-ЧĔП

## Сăвăс аптăратсан



Чăх сăвăса пула канăçне çухатать. Çавна май кайăккĕшĕк вăйсăрланать. Сăвăс ернине пĕлме ансат: чăх çунаттине уçса пăхмалла, унта тĕк çук, савăнпах юн ĕмекенсем лайăх курăнаççĕ.

Кайăк-кĕшĕк витине утюг парĕпе тасатма сĕнеççĕ. Хушăка солидол сĕрмелле. Вăл сăвăса йыш хушма чăрмантарĕ. Чăха хлорофос хутăшне /1 витре шыв пуçне 2 апат кашăкĕ хлорофос/ чиксе кăлармалла.

Çавнашкалах кайăк-кĕшĕке кĕлпе «çăвăнтарни» те, вите стенисене извеçпе сăрлани те пулăшать. Кĕл савăтне тултарсах тăмалла, мĕншĕн тесен чăх-чĕп ăна хăвăрт салатать.

СЫВЛĂХ

## Исĕм



Атеросклерозпа чирлесен кунне виçĕ хутчен апат умĕн пĕрер стакан исĕм сĕткенĕ ĕçмелле. Сиплев курсĕ: 6 эрне.

Бронхитран хура исĕм пулăшать. Çырлан вăррине те пĕрле чăмламалла.

Тăтăшах тула тухайманнипе асаплансан апат умĕн 1 сехет маларах кунне виçĕ хутчен 2-шер стакан исĕм сĕткенĕ ĕçмелле. Çапла – 2 уйăх.

Нерв тытăмĕ хавшасан тата пĕрмай вăй пĕтсен те ытларах çак сĕткенпе сăйланмалла.

Подагрăпа чирлекенсен те 1-1,5 уйăх таранах апат умĕн 1 сехет маларах кунне виçĕ хутчен исĕм сĕткенĕ ĕçмелле. Малтанах çур стакан пуçласан каярах виçене 2 стакана çитермелле.

*Асăрханăр: сахăр диабечĕпе, вар-хырăм чирĕсемпе асапланакансен исĕм сĕткенне виçесĕр ĕçме юрамасть.*

## Шăк хăмпи шыçсан

Шăк хăмпи тĕрлĕ инфекци лексен шыçать. Амаксенчен пĕри – цистит. Вăл аптратсан, уйрăмах ача çуратман хĕрсен, тухтăр патне каймалла. Чир каярахпа çие юлассине чăрмав кÿме пултарать.

Чирлес мар тесен, паллах, шăнасран сыхланмалла. Унсăр пуçне апатра тăварланă, консервланă çимĕç сахалрах усă курмалла. Гигиенăна пăхăнмалла, час-часах çăвăнмалла.

Чиртен сыхланма май килмерĕ тăк ăшă тăхăнмалла, пăрăçлă апат çимелле мар. Сĕтпе симĕс чей, петрушка шывĕ, кĕтмел компочĕ ĕçмелле.

Халăх медицини кĕлетке температури хăпарсан урана 32-35 градуслă шыва чикме сĕнет. Хырăм айне хуппипе пĕçернĕ ăшă çĕрулми тÿсе хумалла. Пахчаçимĕç, сĕт-турăх çимелле. Тĕрлĕ ăшă шĕвекпе нумай сăйланмалла.

Каяш тухманран çемçетекен тĕрлĕ эмел те ан ĕçĕр. Вар-хырăма ĕçлеттерме хура слива, йÿçнĕ тата чĕрĕ сĕт, пĕçернĕ панулми, кишĕр сĕткенĕ, йÿçĕтнĕ купăста ытларах çийĕр.

Шăнă чухне ыратни йĕтĕн вăррине сĕтпе е шывпа ĕçсен лăпланĕ.

2 апат кашăкĕ вĕтетнĕ шăлан çырлин тымарне 1 стакан вĕри шыва ярса 15 минут вĕретмелле, 2 сехет лартнă хыççăн сăрăхтармалла, апат умĕн çуршар стакан кунне тăватă хутчен ĕçмелле.

Шăк хăмпи чирне ирттерме çавăн пекех кĕтмелтен /1 стакан вĕри шыва 2 чей кашăкĕ курăк ямалла/, упа çырлинчен, мулкач курăкĕнчен /1 стакан вĕри шыва 2 чей кашăкĕ курăк ямалла/ хатĕрленĕ чей пулăшать.

## Ÿт хытсан

Алă е ура ÿчĕ сăтăрăнса хытрĕ е хĕрелчĕ тĕк – çийĕнчех сиплев пуçламалла. Çак вырăна шăнăр курăкĕ хурса çыхмалла. Компреса улăштарсах тăмалла.

Шăнăр курăкĕ вырăнне календула чечекĕпе усă курма юрать. Анчах та малтан ăна вĕтетмелле.

Пăрса хутаçне вĕттĕн турамалла. Пăтă майлă хутăша ал-ура хытти çине хумалла. Вăл ыратнине ирттерет, ÿте çемçетет.

ЫЙТУ-ХУРАВ

## Çĕлене хăратма

**Эпир вăрман çумĕнче пурăнатпăр. Пĕрре пахчара çĕлен куртăм. Ăна мĕнле майпа хăратма пулать-ши?**

**Валентина М.**

Чи малтанах, пахчари çÿп-çапа пуçтармалла, курăка çулсах тăмалла. Унсăрăн пахчара та йăва çавăрма пултарать вăл.

Иккĕмĕшĕнчен, пахчана чĕрĕпе илĕртмелле. Вăл çĕлене хăваласа ярĕ. Чĕрĕп кÿсса килтĕр тесен çын çÿремен вырăна сĕт лартса памалла. Чĕрчун чăх какайĕ те юратать.

Виççĕмĕшĕнчен, çĕлен шавлă вырăна пăрахса каять. Сăмахран, сасă кăларакан хатĕр илме пулать. Ăна çĕр çине чалăш тирсе хумалла та батарейкине кăна улăштарса тăмалла.



ВӐТ, ТӖНЧЕ

# Кукамайӑн – Интернет



Институтри экзаменсем вӗҫленсен каникула кукамай патне кайрӑм. Ача чухне те ӑшӑ кунсене кунтах ирттернӗ-ҫке. Паллах, ноутбука та пӗрлех илтӗм. Пӗлмен кинемейсем валли: ноутбук – кӗнеке пек уҫӑлса хупӑнакан компьютер. Эпир, ҫамрӑксем, Интернетсӑр пурӑнаймастпӑр-ҫке. Куншӑн час-часах сӑмах та лекет пире. Апат ҫиме те манатпӑр имӗш. Тӳрех тӳрре тухам. Вӑхӑта кун каҫа социаллӑ сетьсенче ирттермен эпӗ, кукамая пахчара пулӑшмаллине манман. Каҫсерен ноутбука ҫутаттӑм паллах. Кукамай та хушӑран ман ҫума пырса ларатчӗ, эпӗ мӗн ӗҫленипе кӑсӑкланатчӗ.

Манӑн юратнӑ ҫыннӑма мӗнпе те пулин йӑпатмалла-ҫке. Хамӑр ял ҫыннисен сӑнӳкерчӗкӗсене кӑтартаттӑм. Хам та камӑн пурнӑҫӗнче мӗн ҫӗнни пулса иртнипе хаваспах паллашаттӑм – социаллӑ сетьсенче йӑлтах паллӑ-ҫке.

– Ара ку Маиҫ мӑнукӗ-ҫке! Тӑр-ха! Тӑр... Куҫлӑха тӑхӑнам. Лайӑхрах пӑхам... – ҫапла пуҫланчӗ чи кӑсӑкли. Ку таранччен кукамай хӑйне лӑпкӑ тытатчӗ. Ман ҫумра кӑштах тӑратчӗ те ҫывӑрма каятчӗ. – Вӑл качча тухнине илтменччӗ-ҫке!..

Тепӗр кун Дашӑн, Маиҫ мӑнукӗн ӗнтӗ, шурӑ кӗпе тӑхӑннӑ сӑнне курма кӳршӗри тата виҫӗ кинемей каҫрӗ. Тӑванӑм чӗннипе паллах. Пӗри те тепри ку е вӑл ар-хӗрарӑм Интернетра пуррине тӗрӗслеме ыйтать. Эх, пуҫланчӗ каҫхи пурнӑҫ! Кун сӑнне кӑтарт та тепринне шыра. Ывӑлӗ-кинне, хӗрӗ-кӗрӳшне еплерех тимлӗ сӑнаҫҫӗ тата! Нихӑҫан курман тейӗн. Уйрӑмах Кӗтерук аппа тӗлӗнтерет ку енӗпе.

– Э-э-э... Кинӗн кун пек кӗпе те пур иккен. Иртнинче тата урӑхипеччӗ. Кӑна та курман-ха эпӗ... Ку йӗммине хӑҫан туяннӑ-ши тата?..

– Манӑн та яла пӗрмай пӗр тумпа килет. Спорт форми текеннине тӑхӑнса ярать те. Хӑна-вӗрле таврашӗнче ҫеҫ куркалатӑп илемлӗ ҫи-пуҫне, – тет унпа пӗр шухӑшлӑн пулса Ҫинук аппа.

– Ара, тӑхӑнччӑрах. Хӗрарӑмӑн илемлӗ пулмалла, – хушса хурать ҫавӑнтах Елис аппа.

– Укҫи-тенки пулсан капӑрланччӑрах, – сӑмах вӗҫне юлмасть кукамай та. – Эпир ҫити-ҫитми пурнӑҫпа ӳсни те ҫитет.

– Туянас тесен те лавккара йӗм таврашӗ те сутмастчӗҫ ҫав... – тарӑннӑн сывласа илеҫҫӗ те кинемейсем тӗпчеве малалла тӑсма ыйтаҫҫӗ.

Вӑхӑт иртнӗ май каҫхи ку «ӗҫ» кӑнтӑрлахине куҫрӗ. Ара, манӑн ҫамрӑксемпе урама та тухас килет-ҫке. Ҫавӑнпах Интернетри «сунар» валли вӑхӑт кӑнтӑрла уйӑрма тытӑнчӗ кукамай-асанне. Пахчари, килти ӗҫсене пурнӑҫлаҫҫӗ те каннӑ май пӗр хушӑ компьютер умне вырнаҫаҫҫӗ.

Ӗмӗр пурӑн – ӗмӗр вӗрен тесе те ахальтен каламан-тӑр. Ку техникӑна еплерех ҫутмаллине те ӑнкаракан пулчӗҫ. Уйрӑмах кукамай правур ку енчен. Ара, ыттисем ют ҫын япалине тӗкӗнме те хӑраҫҫӗ-ҫке. Ҫӗмӗресрен асӑрханаҫҫӗ. Пӗр кунхине кукамай вуҫех те еплерех пускаламаллине вӗрентме ыйтрӗ. Манас мар тесе хӑшне-пӗрне ҫыркаласа та хучӗ-ха.

– Тӗлӗнтеретӗн, кукамай. Мӗн тӑватӑн кунпа?

– Эсӗ кайсан унсӑрӑн алӑ-урасӑр юлатпӑр-иҫ...

– Эпӗ компьютерне пӗрле илсе каятӑп-ҫке.

– Ара, эсӗ ку кивелнӗ, ҫӗнни кирлӗ теттӗн-и-ха?

– Ҫапла та-ха...

– Эпӗ сана укҫине парӑп, – сӑпайлӑн хуравларӗ тӑванӑм.

Халӗ манӑн ҫӗнӗ техника – планшет. Кукамай вара Интернетпа туслашрӗ. Хулана таврӑниччен ӑна пӗр-пӗрин патне ҫыру ҫӳретме те вӗрентрӗм. Хӑнӑхса пырать пек-ха. Манас тӑк – шпаргалки те алӑ айӗнчех. Савӑнать куншӑн. Пенси илсен укҫине тӑкакламалли мур – Интернет – тупӑннишӗн ҫеҫ кӑмӑлсӑрланать хушӑран. Кӳршӗ-аршӑ пуҫтарӑнса халапа ярсан пусӑрӑнчӑклӑхӗ иртет курӑнать.

Хӗллехи каҫсенче нуски ҫыхмаллине ҫеҫ ан манччӑр ӗнтӗ кинемейсем.

**ЕКАТЕРИНА.**
Шупашкар хули.

АХ, АНЧАХ

# Укҫа паман упӑшка

Техника паркӗ салансан Алинӑн упӑшки йӳнӗ хакпах 3 машина илсе юлчӗ. Кайран пурне те ют ҫынсене тара пачӗ. Халӗ кунӗпех диван ҫинче телевизор курса выртсан та укҫа килет унӑн. Унсӑр пуҫне хӑй те ҫаврӑнӑҫуллӑ. Укҫа ӗҫлесе илме май тупать вӑл.

Алина урай ҫӑваканра тӑрӑшать. «Хӑтлӑ хваттер те, ҫӗнӗ «иномарка» та пур, килте ларасчӗ унӑн», – шухӑшлаттӑм ӑна аса илсен. Э-э-э, ҫук, ӗҫ кирлех иккен ку хӗрарӑма.

«Хамӑн шалӑва капӑрланмалли хатӗр-хӗтӗр илсе пӗтернӗччӗ. Шӑп та лӑп ҫав вӑхӑтра упӑшкан тинӗс хӗрринче канас килсе кайнӑ. Те кум ӳкӗте кӗртнӗ ӑна – пӗлместӗп. Вӑл тӗнче курса ҫӳреме юратать. Ытти чухне Атӑл хӗрринче палатка лартнипех ҫырлахаттӑмӑр. Упӑшкан шухӑшне ырларӑм та канма каймашкӑн хатӗрленме пуҫларӑмӑр», – тет пӗлӗш. Ҫул ҫинче ывӑнни ҫинчен каланине сиктерсе хӑварма та юрать. Хӗвел тухӑҫри пӗр ялта коттеджа вырнаҫнӑ вӗсем. Унти тавралӑхпа киленнӗ, чун каниччен хӑйӑр ҫинче выртнӑ. Дельфинпа ярӑнма кайнӑ та – хаклӑ ыйтнӑран ҫаврӑнса утнӑ. Экскурсипе те кӑсӑкланман.

«Асӑнмалӑх темӗн тӗрлӗ япала илсе килесшӗнччӗ. Упӑшка укҫа памарӗ. Каҫхине эрех ӗҫсен кӑмӑлӗ ҫемҫелет-ха унӑн, анчах ирхине укҫа пирки сӑмах пуҫарнине илтесшӗн те мар», – макӑрас пекех калаҫӑва тӑсать хӗрарӑм. Апат-ҫимӗҫ лавккинче кӑна тӑкакланнӑ вӗсем.

Ҫапах та кӳреннине нихӑҫан та мӑшӑрне кӑтартмасть Алина. Ун умӗнче тапӑртатса кӑна тӑрать. Арҫын мухмӑрла аптӑрасан та сивӗ сӑмах каламасть. Тытать те лавккана минерал шывӗ патне тухса чупать. Яшкари какай пысӑк татӑкне те ӑнах хурса парать. «Ҫемьене тӑрантаракана вӑй нумай кирлӗ», – ҫапла калама юрататъ вӑл.

Алина пӗр лавккара урай ҫӑватчӗ. Шалӑвӗ хӑйне тыткаламалӑх ҫитсе пырать паллах. Халӗ тепӗр лавккара та ӗҫ тупӑннӑ ун валли. Икӗ хут ытларах ӗҫлесе илесшӗн хӗрарӑм. Тепӗр ҫул каллех тинӗс хӗррине ҫул тытасшӑн вӗсем. Пуҫтарса пынӑ нухратпа темӗн тӗрлӗ сувенир туянасшӑн пӗлӗшӗм. Ун чухне упӑшкинчен укҫа ыйтмалла пулмӗ унӑн.

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**

ЧУНРИ

# Тӑван килӗм пуш-пушах

Эх, ӑҫта-ши ҫамрӑклӑхӑм? Тепӗр хутчен пурӑнса ирттересчӗ ӑна. Ҫук, иртнӗ кунӑм таврӑнмасть. Атте-аннене те, савнине те упранӑ пулӑттӑм...

Хам пирки шкулта лайӑх вӗреннӗ тесе калаймӑп. Ҫавӑнпах аннен мана аслӑ пӗлӳллӗ тӑвас ӗмӗчӗ пурнӑҫланаймарӗ, техникумра ҫеҫ вӗрентӗм. Салтакра пултӑм. Унтан таврӑнсанах авлантӑм. Ҫук, юратнипе мар. Ӑнсӑртран пулса тухрӗ ку. Вӑйӑ шайӗнче. Анчах атте-анне туй тӑвасси ҫинчен калаҫса татӑлсан тин ку шӳт пулнине кама ӗнентерӗн? Ҫынран та аванмарлантӑмӑр-тӑр. Пурӑна киле савасса шантӑмӑр-ши? Ара, Наташӑпа пӗр-пӗрне килӗштермен те мар. Илӗртӳллӗччӗ, илемлӗччӗ вӑл. Хитре хӗре кам хуҫ хывмӗ? Анчах куҫ мар, чун юрататъ-мӗн. Ҫакна халӗ, ватӑлсан, никамран та лайӑх пӗлетӗп.

Ытла та ҫамрӑкла авлантӑм ҫав. Ашкӑнчӑк ҫулсенче. Ҫавӑнпах килте ларассӑм килмерӗ. Ҫамрӑк мӑшӑр кӗтнине пӑхмасӑрах туссемпе ташӑ каҫӗсене те ҫӳрерӗм, часах атте пуласса мансах хӗрсене куҫ хӗсрӗм. Вӗсем те аллӑмра ҫӗрӗ пуррине курмарӗҫ те тейӗн. Наташа шӑппӑн ҫеҫ кӗтетчӗ: аякри хулана ӗҫлеме кайсан – эпӗ килессе, Шупашкарта чухне – киле таврӑнасса. Ҫамрӑкӑн юн вӗрине, чун каниччен савӑнса ӗлкӗрейменнине ӑнланатчӗ те вӑхӑт иртнӗ май эпӗ улшӑнасса шанатчӗ. Ҫакна пытармастчӗ. Юрататчӗ мана. Эпӗ вара – ҫук.



Ҫавӑнпах-ши – киле те таврӑнассӑм килместчӗ. Савман ҫынпа пурӑнма ҫав тери асаплӑ. Айккинче чуна ҫывӑххи пур чухне – пушшех.

Аякри хуласене ултӑ ҫул тӑтӑш ҫӳренӗ хыҫҫӑн тӗп хуламӑртах тупӑшлӑ ӗҫе вырнаҫма май килчӗ. Куншӑн уйрӑмах арӑм савӑнчӗ. Тинех упӑшкипе юнашар савӑнса пурӑнасса шанчӗ-ши? Аплах пулмарӗ. Кашкӑра темӗн чухлӗ тӑрантарсан та вӑрманаллах пӑхать теҫҫӗ. Эпӗ те айккине чупас йӑлана пӑрахӑҫлаймарӑм. Хӗрӗме ашшӗн тимлӗхӗ кирлнине пӗлсе тӑрсах юлташсем уҫӑлма чӗнсен хирӗҫлеймерӗм. Хӗрарӑма ҫакӑ, паллах, вӗчӗрхентерчӗ.

Ҫапла пӗррехинче хамӑн пысӑк та таса юратӑва тӗл пултӑм. Аня, Анечка... Епле пурӑнатӑнши эсӗ? Халӗ те саватӑп-ҫке сана. Иксӗмӗр уйрӑлни миҫе ҫул иртнӗ пулин те сӑну паян та куҫ умӗнчех. Еплерех тунсӑхларӑм сансӑр!

Ташӑ каҫӗнче паллашрӑмӑр Аньӑпа. Малтанах ӑна та пурнӑҫӑма хаваслатма пулӑшакан пикесен йышне кӗртес теттӗм. Анчах... эпӗ палӑртнӑ пек мар, пач урӑхла сиксе тухрӗ. Анюк пӗтӗм ӑш-чикӗме ҫавӑрттарчӗ. Чӗреме ӗмӗрлӗх кӗрсе вырнаҫрӗ. Урӑх никама та курассӑм та, итлессӗм те килмерӗ. Мӗн тери саврӑм ӑна! Пӗр ҫын тепринсӗр ҫав таранччен тунсӑхласса малтан чухламан та. Иккӗн мӗн тери лайӑхчӗ пире! Савни ытамра чухне телейлӗ пулма урӑх нимӗн те кирлӗ марччӗ. Анюта та юратнине пытармарӗ. Ӑна шанмасӑр тӑма сӑлтав пулмарӗ. Шӑпах Анюк мана тӗнчери ытти мӗнпур хӗрарӑм ҫинчен мантарчӗ.

Ҫак таса хутшӑнӑва упраймарӑм... Аньӑна ҫемье пуррине калама шиклентӗм. Малтанах ку хыпара унӑн пӗлмесен те юрать пек туйӑнчӗ. Вӑл вӑхӑтра аллӑмри ҫӗрре ҫухатнӑччӗ эпӗ. Кайран... Анюка ҫухатасран хӑрарӑм. Тасаскер кун пирки илтсен манран сивӗнесрен сыхлантӑм. Савнине ҫухатассӑм килмерӗ. Анчах тӗрӗслӗх ҫиеле тухатех.

Наташа та эпӗ унран пач сивӗннине туйрӗ. Урӑххине чунран юратнине пытармасӑр каларӑм ӑна. Вӑл уйрӑлма килӗшмессе пӗлтерчӗ. Ку вӑхӑтлӑх туйӑм иккенне ӗнентерме тӑрӑшрӗ. Юрату иртессе каларӗ. Анюкпа иксӗмӗре сивӗтессишӗнех эпӗ хӑюлӑх ҫиттереймен утӑма турӗ. Анюк, паллах, каҫараймарӗ мана.

Савнӑ ҫынсӑр савман хӗрарӑмпа текех пурӑнаймарӑм. Аякка тухса кайрӑм. Нумайлӑх. Тӑван тӑрӑха ҫирӗм ҫул таврӑнмарӑм. Чун канлӗхне ют ҫӗрте тупасса шантӑм. Кӑлӑхах. Лӑпланнӑ пек пулнӑ чӗрем ачалӑх, ҫамрӑклӑх иртнӗ вырӑна ҫитсен епле ҫурӑлса каймарӗ-ши? Тӑван ялӑм та – пуш-пушах. Кунта та ман чунри евӗр ҫил-тӑвӑл пӗтӗмпех аркатнӑ.

Мӗн пулса иртнӗ-ха ҫак икӗ теҫетке ҫулта? Аттепе анне вилчӗҫ. Вӗсене юлашки ҫула ӑсатма та килеймерӗм. Хӗрӗм хӑй те – амӑшӗ. Ӑна пӑрахман эпӗ, укҫа-тенкӗпе пулӑшсах тӑнӑ. Арӑм пулнӑскер тепӗр арҫынпа пурӑнать. Анюк... халӗ те пӗччен. Эпӗ аякка тухса кайнине пӗлсен калаҫайми пуличчен куҫҫуль тӑкнӑ терӗҫ. Арҫынсене текех нихӑҫан ҫывӑха ямасса тупа тунӑ-мӗн. Ҫавӑнтанпах хытӑ чунчӗреллӗ вӑл. Кӑмӑл-туйӑм пирки мансах пӗтӗмпех ӗҫе кӳлӗннӗ. Эпӗ вара... пӗр хӗрарӑм хыҫҫӑн тепри ҫумӗнче ырлӑх шырарӑм. Тупаймарӑм. Анюк пуҫран пӗр самантлӑха та тухмарӗ. Чун-чӗрем тӑлланса ҫитнӗрен тӑван тӑрӑха таврӑнма тӗв турӑм.

Ачалӑх шӑршипе тулнӑ тӑван килте ӑшӑлӑх ҫукки те ӑш-чикӗме тулать халӗ. Эпӗ кӗҫӗнни-ҫке. Манра ҫак яваплӑх. Юратӑва сыхласа упрама та, тӗп тивӗҫӗме пурнӑҫлама та пӗлеймерӗм. Атте-аннеҫӗм, Анюкӑм, каҫарӑр мана, тархасшӑн...

**ВАҪҪИЛИ.**

# Юлашки çыру

Анатолий КИБЕЧ



/Малалли. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте/.

– Юркка костюмне кам тăхăнтартнă вара мана? – терĕ.

Хăй çинчи тума каярах асăрхаман та иккен вăл. Чечеклĕ халат, паллах, лайăхрах.

– Мария Ивановна, мĕнле пурăнатăн? – ыйтрĕ тин çеç кĕрсе тăнă шурă халатлă хĕрарăм, врач-психиатр.

Ăна курсан Маруç аппа унталла-кунталла пăхса илчĕ те Юркка тумне ярса тытрĕ, кăкăрĕ çумне чăмăртарĕ.

– Манăн ывăлăм патне каймалла, – терĕ.

Вăл алăк патнелле утнă вăхăтра ăна хирĕç Сантăр пичче кĕрсе тăчĕ.

– Маруç, тата мĕн кăтартăн-ши ĕнтĕ эсĕ? Тухтăрсем мĕн хушнине итлеме тиветех сан. Юркка тумне хама пар-ха эсĕ, – терĕ арçын аллине тăсса.

– Çук, памастăп, хамрах пултăр. Сантăр, ку хĕрача Зоя ятлă. Вăл мана Юркка çырăвне вуласа паратăп терĕ.

– Юрать, юрать, Маруç аппа, пĕрле вулăпăр. Халĕ тепĕр пӳлĕме куçар-ха. Унта хамăр ялсем те пур.

Палатăра, чăнах та, Маруç аппапа пĕрле ӳснĕ хĕрарăмпа тепĕр самай çамрăкскер ларать. Виççĕмĕш койки вара пушах.

– Маруç аппа, сан сывлăхна тĕрĕслесе пăхас тетпĕр, темиçе кун çакăнта выртмалла пулать, – терĕ Зоя.

– Çук, çук, эп сывах. Ман Юркка патне каймалла.

– Маруç, унта хам та кайăп-ха, эсĕ вара тухтăрсем каланине итле.

– Ĕçмелли илме ан ман. Выçă ан çӳретĕр вăл.

– Юрать. Юркка тумне илсе каям эппин.

– Çук, хампах пултăр вăл, – терĕ те Маруç аллинчи тума минтер айне хучĕ. Психиатр Сантăр пиччене шăппăн темĕскер каларĕ. Вара арçын калаçăва урăх еннелле пăрчĕ.

– Маруç, сан валли мĕн илсе килес, мĕн çиес килет пек?

– Çиес килмест ман. Зоя, хĕрĕм, Юркка çырăвĕ ăçта çак? Вула-ха çавна.

– Маруç аппа, витаминлă укол тăварха малтан, – терĕ тин çеç шприцпа кĕрсе тăнă сестра.

– Эс кам вара? Мĕншĕн сана палламастăп? Кам эсĕ?

Маруçăн кăмăлĕ улшăннине сиссен ыттисем аптранипе пĕр-пĕрин çине пăхрĕç. Зоя тӳрех тавçăрса илчĕ.

– Маруç аппа, уколне хам тăвам-ха. Акă кур, пĕртте ыраттармасть вăл.

– Ыттисем мĕн пăхса тăратăр-çак? Укол тунине курман-им? – терĕ хĕрарăм именнине палăртса.

Зоя хĕрарăма выртма хушрĕ. Ыттисем тухрĕç. Маруç пуçне минтер çине меллĕрех хучĕ те çывăрса кайрĕ. Кăшт вăхăт иртсен калаçкаласа илчĕ: «Юркка, паян сан патна апатпа аçу пырать», – терĕ.

Психиатр вара палатăрисене асăрхаттарса Мария Ивановнăпа пурнăçри савăнăçлăрах самантсем пирки калаçма сĕнчĕ, ачалăха аса илни те пăсмасть терĕ. Пăтрашуллă пуçа йĕркене кĕртесси пĕрле выртакансенчен те нумай килет. Çавăнпа çак палатăна вырнаçтарнă ĕнтĕ ăна.

Зоя Юркка çырăвĕсене киле кайса илсен психиатрпа иккĕшĕ тĕп врач патне кĕчĕç. Ыйту – çырусем пирки.

– Çак çырусене вулани Маруç аппана вилнĕ ывăлне аса илтерсе тăни пулмĕ-ши? – ыйтрĕ психиатр. – Тен, вуласа памалла мар вĕсене?

– Ун пек çынна улталани пулмĕ-ши? – терĕ Зоя. – Эпĕ ăна кунта шăпах çак çырусемпе илĕртсе илсе килтĕм. Унсăрăн ĕç тухмастчĕ. Ма тесен вăл килтен тухса тарса масар çинче çывăрни те пулнă. Кунтан ним ыйтмасăр кайсан мĕн тăвăпăр-ха? Эпĕ çырупа пырасса кĕтет вăл.

– Мĕнле тусан лайăхрах-ши? – шухăша кайрĕ тĕп врач. – Ывăлĕ çырнине мĕнле йышăнĕ-ши вăл?

– Апла-тăк, пĕрне вуланă хыççăн сăнаса пăхар. Вара паллă пулĕ.

– Хăшĕнчен пуçлас-ши? – ыйтрĕ Зоя. – Эпĕ ăна Юрккан юлашки çырăвĕпе паллаштарма сăмах панăччĕ.

– Çук, çук, ун пек тĕрĕсех пулмасть. Малтанхинчен пуçла та кашни кун пĕрер вуласа пыр. Миçе çыру терĕн-ха?

– Вунпĕр.

– Питĕ аван. Ĕç йĕркеллĕ кайсан сыватма та май килĕ.

Çапла турĕç те. Пĕрремĕш çыруран пуçларĕç. Ăна Юркка чаçе çитсен çырнă. Десантниксен шкулне лекнĕ иккен вăл. Уншăн хĕпĕртенине, кунта çирĕп сывлăхлисене кăна илнине палăртать. Хăйне ăсатма Канаша çити пынăшăн Зойăна тав тăвать, ялти хыпарсене çырса пĕлтерме ыйтать, пурне те салам калама хушать. Зоя çыру вĕçĕнче вырăсла «Лети с приветом, вернись с ответом», – тенине те вуласа пачĕ. Вара «ыран теприне вулăпăр» тесе Зоя тухрĕ. Ун хыççăнах психиатр кĕчĕ те ыттисен сывлăхне тĕрĕсленĕ хыççăн Маруç аппа патне çывхарчĕ. Чылайччен калаçса ларчĕç вĕсем. Маруç аппан пуçĕнче çаплипех ывăлĕн сăнарĕ.

– Юркка Зоя патне çыру янă-ха, – терĕ вăл лăпкă сасăпах. – Хăй вуласа пачĕ.

Тепĕр кунне ирхине ыттисем Маруç аппа сассипе вăранса кайрĕç. Чĕрçи çинчи кушака ачашласа калаçса ларать вăл. Çĕрле ун пуçĕ патне пырса выртнă иккен мăрлатса лараканскер. Алăка хăех уçса кĕнĕ. Ыттисем ăна кухня çывăхĕнче çӳренине унччен те асăрханă-ха. Маруç вара пĕрремĕш хут курать.

– Акă ывăлăм кушак пулса килчĕ, – терĕ хĕпĕртесех чирлĕ хĕрарăм, çине тăрсах ачашларĕ. Кайран та кунĕпех йăтса çӳрерĕ, «Зойăна курмарăна» тесе темиçе çынран та ыйтрĕ. Кĕтет ĕнтĕ.

Зоя кун вĕçнелле тин çитрĕ. Каллех çыру вуларĕç. Юркка присяга йышăнни çинчен пĕлтерет, Зойăна çыру çырнăшăн тав тăвать, сăнӳкерчĕк ярса пама ыйтать. Унччен пекех Зоя çырăвне питĕ кĕтнине калать.

– Зоя, эсĕ пурне те вуламастăн пулас. Нивушлĕ юрататăп тесе çырни çук вара унта? Пурах ĕнтĕ. Çав вырăна сиктерсе хăваратăн курăнать, – терĕ палатăри çамрăк хĕрарăм.

– Юратнăранах çырнă ĕнтĕ вăл, – хушса хучĕ тепри, Маруç тантăшĕ.

Зоя именнипе кăштах сăнран улшăнчĕ, пичĕ те хĕрелчĕ. Çыру çине пăхса илчĕ те:

– Кăштах ун пирки те пур-ха, – терĕ.

– Апла тăк, вула эппин, – ыйтрĕ çамрăкки.

– «Кунта тем калаçакан та пур. Хĕрсем ăсатнă чух кĕтме сăмах параççĕ те çур çултан качча сиксе те тухаççĕ. Эсĕ ун пек мар пуль тетĕп. Шанатăп сана. Эсĕ сăмахна тытсан пĕрлех пулăпăр», – тет кунта Юркка. Урăх нимех те çук, – терĕ Зоя.

– Ку вара сахал-им? Çак сăмахсене кашни хĕр илтме хавас, юратсах çырнă ĕнтĕ вăл, – хаваслансах каларĕ çамрăкки. Анчах çын хуйхине шута илеймерĕ пулас. Зоя çырăва сумккине чикрĕ те кăмăлĕ хуçăлнине кăтартас мар тесе тухса кайрĕ.

– Ăна та йывăр ĕнтĕ, – терĕ аслăраххи. – Маруç хăй те Сантăр çара кайсан никампа та çӳремерĕ. Çапла марччĕ-и-ха, Маруç?

– Панă сăмаха тытнă ĕнтĕ, – хуравларĕ Маруç.

– Эпĕ те Петĕре кĕтсе илнĕччĕ те...

– Вара мĕн пулчĕ? – пăхрĕ кăшт тĕлĕннĕ пек кĕçĕнни.

– Пурнăç ăнмарĕ. Хаклама пĕлмерĕ вăл ман юратăва. Кĕвĕçнине пула алă хума та именмест. Каярах ӳсĕрпе те паркаласа илетчĕ. Халĕ те упăшкана пулах çакăнта выртатăп ĕнтĕ. Пĕрмаях пуç кашлать.

– Ман Сантăр пачах та ун пек мар, – хутшăнчĕ калаçăва Маруç. – Çак тарана çити мана пĕр сив сăмах та каламан вăл.

– Телейлĕ эсĕ, Маруç. Халĕ те юратупа пурăнатăр. Сан çумра шанчăклă Сантăр пур. Ман Петĕртен вара тем те кĕтме пулать.

– Сантăр лайăх-ха. Ывăлăма курас килет-çке, – тесе ачашласа илчĕ тытса ларакан кушакне.

– Сантăр пичче пеккисем халь çукрах çав. Çавăнпах çемьесем те çирĕпех мар, пĕрин хыççăн тепри арканаççĕ, – пĕлтерчĕ кулянăвне çамрăкраххи. – Эпир те ав пĕр çултанах уйрăлтăмăр.

– Пурте хуйхăллăскерсем иккен эпир кунта, Маруç, – турĕ пĕтĕмлетӳ аслăраххи.

Кашни çыру урăхларах калаçу çуратрĕ. Ку хутĕнче Юркка самолетран парашютпа час-часах сиктерни çинчен çырать, кашни кун тенĕ пекех автоматран пертереççĕ тет, Афганистана ямаççĕ пуль те тесе иккĕленсе пĕлтерет.

Кайран вăл, чăнах та, Афганистанах лекет. Унтан çырнисем пурĕ те виçĕ çыру кăна. Пĕрремĕшĕ – унта мĕнле çитни, пач урăхла çĕршыв çыннисем совет çарне мĕнле кĕтсе илни çинчен: пĕрисем – кăмăлпа, теприсем – пăшалпа. «Пире хирĕç çапăçакансене душмансем теççĕ» тесе çырать.

– Душман тени чăваш сăмахĕ пекех илтĕнет, – асăрхарĕ Маруç тантăшĕ. – Тăшман тенĕ пекех.

– Питĕ вăрттăн тапăнаççĕ тет вĕсем, сăрт хушшинче пытанса çӳрекенскерсем унти çулсене питĕ лайăх пĕлеççĕ тет, – тăрăшрĕ ăнлантарма Зоя. – Çанталăкĕ вара çав тери шăрăх тăрать тет, ĕçмелли шыв та питĕ хаклă тет.

Çапла больницăра кун хыççăн кун иртсе пычĕ. Пĕрле выртакансенчен чи çамрăкки сывалса килне кайрĕ. Маруç тантăшĕн пуçĕ кашласа ыратни те чакса пычĕ. Вăл та кунтан тухасшăн. Пĕрмаях килти ĕçсем пирки калаçать, Петĕр мĕнле пурăнать-ши теме пуçларĕ. Хĕрарăм кăмăлĕ ĕнтĕ, пĕччен юлнăскерне хĕрхенет вăл.

Паян Зойăн Юрккан юлашки çырăвне вуласа памалла. Маруç аппа мĕнле йышăнĕ-ши ĕнтĕ ăна? Мĕн çырнине пурне те вуламалла-ши е хăш-пĕр вырăнсене сиктерсе хăварсан лайăхрах-ши? Тен, ку хутĕнче сыватакан врачпа калаçса пăхни усăллă? Психиатр яланхи пекех çырăва вуласа тухрĕ те шухăша кайрĕ:

– Мĕнле тусан лайăхрах-ши? – терĕ. – Ку хутĕнче малтан упăшкипе калаçса пăхма тивет. Вăл пур чухне вуласа парăн, – терĕ Зойăна. – Хам та пĕрлех пулăп.

Çырăвĕ вара пачах та унчченхисем пек мар. Малтан лайăхах пуçланать-ха, командирсене, çар çыннисен хушшинчи туслăха ырласа çырать. Пĕрне пĕри хӳтĕленине палăртать. Тем пек паттăррăн çапăçсан та вилекен нумайййне пĕлтерет Юркка. «Пире тепĕр базăна, сăрт хушшинерех куçарчĕç» тет. «Летчиксем пĕлтернĕ тăрăх, икĕ сăрт хушшипе кунталла душмансен йышлă ушкăнĕ çывхарать иккен. Шучĕпе илсен пиртен нумайрах та. Анчах эпир хăрамастпăр. Лайăх кĕтсе илĕпĕр-ха вĕсене. Техника енчен эпир пурпĕр вăйлă. Мĕн пулса иртнине тепĕр çырура пĕлтерĕп-ха. Чăвашсем эпир кунта виççĕн, вĕсем те салам яраççĕ. Зоя, сан сăнӳкерчĕкӳ яланах пĕрле, ăна пăхса илсенех вăй кĕрет, пĕрле пуласса шанас килет. Кунти хĕвел пек хĕрӳллĕ салампа Юра», – вуласа пĕтерчĕ Зоя паттăр туйăмлă каччă çырăвне.

(Вĕçĕ пулать).

## САВĂ СĔВЕМĔ

Çемен ЭРЕШ

### Кунта ачалăх упранать

Ача-пăча тумланнă капăр,
Хаваслă кулă питсенче.
Каллех шкула чĕнет сентябрь
Пĕлӳ сĕтелĕ хушшине.

Шăнкарав сасси янрать.
Вышкайсăр
Хăпартланса тапать чĕре.
Пĕрремĕш хут пулас профессор
Шкул алăкне уçса кĕрет.

Ан именсем эс, пĕчĕк тусăм,
Атя, вĕçтер пуласлăха!
Чи малтанхи хăв тунă пусăм
Выртать виçесĕр уçлăха.

Санпа юлташлă пулĕ куçăн
Пĕлӳ çăл куçĕ – кĕнеке.
Пĕлӳ тĕнчийĕ саншăн уçă –
Сана кĕтет вĕрентекен.

Пĕлӳ тĕнчи вăл – çутă, аслă.
Кам ӳркенмест – тупать тивлет.
Кунтан тухать, Платон пек аслă,
Пулас министр, президент.

Кунта пиçет çĕршыв кĕрнекĕ –
Ăславçăсем, çыравçăсем...
Патшалăх шанчăкĕ, тĕрекĕ –
Çар пуçĕсем, сухаçăсем.

Хуçаланать кунта пĕртанлăх,
Кунта ачалăх упранать,
Амаланать кунта тăванлăх,
Кунта çĕршыв чăмăртанать.

Людмила СОРОКИНА-ПУРЛУШКИНА

### Вĕрентекен

Ачалăх алăкне уçатăп,
Кĕретĕп унăн тĕнчине.
Хама пит ырă эп туятăп,
Юнашарах тăрать анне.

Каллех тулта хавас сентябрь.
Ял вĕçĕнче юратнă шкул.
Йĕри-тавра илемлĕ, капăр,
Эс тăрăшуллă, тимлĕ пул.

Пĕрремĕш шăнкăрав янравĕ
Пиртен инçе халь, аякра.
Вĕрентекенĕн çут сăнарĕ
Çулсем иртсен те ман асра.

Кĕр кунĕ, ăмăр-и çанталăк,
Чупать-и юр çула шăлса?
Тӳпе карать-и çун шăналăк?
Сире итленĕ пăлханса.

Чи çепĕç асилӳ – ачалăх,
Чи ырă çын – вĕрентекен.
Этемлĕх, ларт ăна эс палăк,
Эпир кашни – вĕренекен.

# Çемье... кĕсье телефонне пула арканнă

**Сауд Аравийĕнче кача тухнă хĕр арăм статусĕнче пĕр сехетрен ытла тытăнса тăрайман. Йăлтах – кĕсье телефонне пула: тин çеç арăм пулса тăнăскер çак япалана мăшăрĕпе иккĕшне тин кăна хĕве хупсан та аларан пĕр самантлăха та вĕçертесшĕн пулман, тăванĕсемпе пĕлĕшĕсем савăнăçлă уявра саламланине итленĕ.**



Официаллă майпа хут уйăрттарнă хыççăн Джидда хулинчи мăшăр хăна çуртĕнче тара илнĕ номере кайнă. Анчах та пике аллинчи телефона вĕçертме ним тусан та килĕшмен. Арçын вара, тăванĕсен сăмахĕсене Guif News илсе кăтартнă тăрăх, упăшка тивĕçне пурнăçлама хыпаланнă. Анчах та телефон пĕр вĕçĕм шăнкăртатнă тата мăшăрĕ чарăнмасăр калаçнă май çамрăк упăшка тĕллевне ниепле пурнăçа кĕртеймен. Телефона самантлăха та пулин айккинелле хума сĕннипе хĕр килĕшмен, ниепле те ўкĕте кĕмен. Кил хуçи те парăнман, сăмахĕнчен пăрăнман. Кĕтмен çĕртен пике тарăхсах кайнă, хăйне ар хутшăнăвĕ пачах та кăсăклантарманнине, тăванĕсен саламĕ уншăн тем чухлĕ пĕлтерĕшлĕрех пулнине каланă.

Тавлашу шăрпăк пĕрчи пек хыпса илнĕ. Урса кайнă арçын пĕр тăхтаса тăмасăр уйрăлма тĕв тунă.

Вăхăт нумай та иртмен, тин кăна авланнăскер суда çитнĕ, уйрăлма ыйту çырса панă. Чăн та, судья ыйтăва йышăнма васкаман, арçынна арăмне каçарма сĕннĕ. Ара, çĕршывра ку енĕпе ахаль те лару-тăру питĕ кăткăс – пĕрлешекенсен 50 проценчĕ уйрăлать. Анчах та кўреннĕ арçын итлесшĕн те пулман, ыйтăвне пурнăçлама çине тăнă.

Кĕçех унăн ыйтăвне тивĕçтернĕ, мăшăрланса пĕр сехет тытăнса тăнă çемье арканнă...

/Politexpert.net/.

# Упăте çурине çăлса хăварнă



**Тюменьри зоопаркра Бразили сериалĕ ўкереççĕ тейĕн. Унта икĕ упăте ами пĕр харăс çăмăлланнă. Анчах та хайхискерсем те сыхсен пурнăçне сăнаççĕ? Амăшĕсенчен пĕри, çăмăлттайскер пулнă курăнать, тўрех хăйĕн çурине йышăнман.**

Упăте çурине амăшĕн ăшшисĕр пăхма питĕ йывăр – кĕлетке температурине 38 градусра тыса тăмалла. Зоопарк заведующийĕ Татьяна Антропова, аптранипе, пĕчĕкскерне хăйĕн килне илсе кайнă. Нимĕн тума пĕлменнипе "ачана" кушак çине хунă. Лешĕ вара, тĕлĕнмелле те, ют "пепкене" йышăннă. Çакна та палăртмалла, кушак хальлĕхе хăй пĕрре те çўрлемен-ха, унра амăшлăх туйăмĕ те пулман темелле.

Икĕ чун халĕ килте пĕр-пĕринчен уйрăлма пĕлмесĕр çўреççĕ, пĕрлех апат çиеççĕ, сывăраççĕ. Росинка, мăр-мăр çавăн ятлă, çамрăках мар ĕнтĕ. Апла пулин те зоопаркран килнĕ хăнана вăл талăкĕпех тенĕ пек хăй çинче çĕклесе çўрет. Упăте çурине кушак çинче ларнă майăнах апат параççĕ. Çак туслăх тата темиçе эрне тăсăлма пултарать – упăте çури пĕр уйăх тултариччен. Ку вăхăталла вăл, кăштах ўссе тĕрекленнĕскер, кушак çинчен хăех анма пуçлать. Çакăн хыççăн ăна хăйĕн çемйи патне вольера таварăççĕ.

Çакна та палăртмалла. Амăшĕ пăхма килĕшмен упăте çурисене çăлса хăварнă тĕслĕх халиччен пĕрре те пулман.

Росинка тата Федя çинчен, упăте çурине вара çапла ят панă, халĕ тĕнчипех калаçаççĕ. Тĕлĕнмелле туслăх çинчен МИХсен вырăнти кăларăмĕсем кăна мар, ВВС, The Telegraph, Associaited Press çырать, кăтартать.

/АиФ-Тюмень/.

# Шывра 38 сехет тытăнса тăнă

**Китай хĕрарăмĕ, шыв тăрăх çулçўреве тухнăскер, карап çинчен тинĕсе ўксе юлнă. Ун çумĕнче çăлав жилечĕ те пулман. Çапах та хĕрарăм вилĕме парăнман, шыв çинче 38 сехет тытăнса тăнă – Шанхайран кăнтăралла пулла тухнă арçынсем асăрхаса пырса çăличчен.**

Фан хушаматлă 32 çулти хĕрарăм пилĕк кунлăха çулçўреве тухнă – Шанхайран Японие тата Кăнтăр Корейăна çитсе курма ĕмĕтленнĕ. Анчах та яланах ĕмĕтленнĕ пек пулса пымасть çав.

Пĕр каçхине Фан палуба çинче уçăлса тăнă. Тем пулнă – хĕрарăм борт хыçне ўксе юлнă. Инкеке лекнĕскер пулăшу ыйтса кăшкăрнă, анчах та каçхи сĕмлĕхре сасси аякка саласнсан та ăна никам та илтмен.

Юрать-ха хĕрарăм спортпа мĕн çамрăкранах туслă пулнă – Фан хăй вăхăтĕнче физкультура университетĕнче вĕреннĕ. Çакă çăлнă та ăна вилĕмрен. Çăлăнăç çуккине асăрхасан хĕрарăм пысăк карапсем çўрекен вырăнтан аяккарах ишсе кайнă – тĕттĕмре ăна асăрхамасса та прултараççĕ-çке, капла вара вĕсен йĕрне çакланма та пулать.

Хĕрарăм пур вăйран шыв çинче тытăнса тăма тăрăшнă. Анчах вăй пĕтсех пынă. Юлашкинчен вăл майлашăнса выртнă та алли-урипе майĕпен кăна малалла-каялла кăштах вылятса тĕлĕрме те вĕренсе çитнĕ. Çапла вара çăлăнăça пурпĕр кĕтсе илнĕ – ăна пулăçсем асăрханă, çыран хĕррине илсе çитернĕ.

/South China Mornirg Post/.

# Кушак... йытта тапăннă

**Канадăри Виктория хулинче тĕлĕнмелле ĕç-пуç пулса иртнĕ. Урса кайнă кушак сывăхрах иртсе пыракан çичĕ /!/ питбульпе вĕсен хуçине тапăннă.**



Тапăну ахаль иртмен – кушак йытăсене те, хĕрарăма та йăлт чĕрмелесе тата çыртса пĕтернĕ. Сурансем тарăн. Йытăсен хуçин хĕрарăмăн больницăра çĕр каçма та тивнĕ.

Кушак хуçи вара хăйĕн юратнă чĕрчунĕ çапла усалланнине халиччен нихăçан та асăрхаманнине пĕлтерет. Вăл палăртнă тăрăх, йытăсем, ахăртнех, ытла та кушак сывăхĕнчен иртнĕ. Лешĕн вара çав вăхăтра çури юнашар пулнă. Хăрушлăха вăхăтра сиснĕ кушак пĕр тăхтаса тăмасăр йытăсем çине сиксе ўкнĕ.

Чăн та, питбульсен малтанах лăпкăн кăна уçăлса çўрекен çурапа унăн амăшне тапăнас шухăш та пулман. Çапăçура та вĕсем хаярланса тытăçма ĕлкĕреймен, мĕншĕн тесен çурине хўтĕлекен амăшĕнчен ирĕксĕрех хўтĕленме тивнĕ. Тытăçура кушака йытăсем темиçе çĕртен кăна кăшт лектерсе ĕлкĕрнĕ. Тарăн сурансем çук. Вăт йытăсене вара аванах лекнĕ. Вĕсен тути-çăварне кушак йăлт чĕрмелесе-çыртса пĕтернĕ. Бандит тесе чĕнекеннине, те ятне кура, тата ытларах çакланнă. Пысăкскерсем хăйсем те кушакран çăлăнайман, хуçине те хўтĕлеймен.

Телее, хирĕç-тăрăва йĕркеллех татса пама май килнĕ. Хăюллă кушак хуçи питбульсен "çемйине" 222 долларлăх чек çырса панă – хĕрарăма больницăра сипленнине саплаштармашкăн тата мораль тĕлĕшĕнчен сиен кўнĕшĕн.

/Вести.ру/.

# Каçхи лĕпĕш вырăнне – арăмĕ

**Австрали арçынни Питер Андерсон вахта мелĕпе инçе çĕрсенче ĕçлесе çўренĕ. Черетлĕ хут çула пуçтарăнсан хайхисем хуларан тухса кайма та ĕлкĕреймен – çакна малтанах çума пуçланă та пĕр хăна çуртĕнче çĕр каçма тĕв тунă. Ĕçкеленĕ хыççăн арçынсем Интернет урлă проституткăсене чĕнме шухăшланă. Чĕннĕ çĕре харăсах темиçĕн çитнĕ. "Пурне те пăхар-ха малтан", – сĕннĕ Питер. Эх, хăйне мĕн кĕтнине пĕлес пулсан-и? Ара, ун умĕнче хăйĕн арăмĕ тăнă!**

Хĕрарăм упăшки ĕçлеме тухса кайнă хыççăн тесе шухăшланă. Проституципе маларах та аппаланнăскер хальхинче те чĕннĕ çĕре хăюллăнах тухса утнă. Пĕр-пĕрне кун пек çĕрте курассине тĕлленме те пултарайман мăшăр малтанах сăмах чĕнеймин пулса ларнă. Унтан... Унтан, паллах, вăрçă пуçланнă.

Çакă паллă. Вăрçса тăраннă хыççăн мăшăр хăна çуртĕнчех çĕр каçма юлнă. Уйрăлас шухăш тытман хайхисем, малалла та пурнăç çулĕпе пĕрлех утма тĕв тунă. Питер Андерсон вара эскорт-агентство тĕлĕшпе тавăç тăратнă: ара, арçын çамрăк проституткă ярса пама ыйтнă, ун патне вара... çулланнă хĕрарăм пырса çитнĕ-çке...

/Business FM/.

# Арçын туй хыççăн мăшăрне палламан

**Алжир арçынни арăмĕнчен 20000 доллар ыйтать – мораль тĕлĕшĕнчен сиен кўнĕшĕн. Авланас каччă пулас мăшăрне маларах макияжсăр пачах курман. Туй хыççăн ирхине вăраннă та – паллайман!**

Çакăн хыççăн арçын суда ыйту çырса панă – арăмне хăйне улталанă тесе айăпланă. "Малтанах эпĕ хваттере вăрă кĕнĕ тесе шухăшларăм, – пĕлтернĕ шар курнă арçын. – Туйччен манăн пулас арăм питĕ хитре те илĕртўллĕ курăнатчĕ".

Халĕ арçын арăмĕнчен хăй психологи енчен шар курнине саплаштарма ыйтать. Ĕçе суд пăхса тухма пуçланă.

/Mirror/.

ТЕППИ

## ☺И-ХИ-ХИК☺

Юлташсем хăнаран таврăнаççĕ. Иккĕшĕ машинăран чиперех тухаççĕ, виççĕмĕшне, ура çинче тăрайманскерне, стена çумне сĕвентереççĕ. Анчах хайхи кайса ўкет. Çĕкленме пулăшса татах сĕвентереççĕ. Каллех ўкет. Юнашарах хĕрарăм иртсе пырать.

– Мĕн тăватăр эсир? – тет çакна курса. – Юлташăр ура çине те çĕкленеймест, эсир вара ăна виççĕмĕш хут пуçхĕрлĕ тăрататăр.

* * *

Манăн арăм питĕ маттур. Эпĕ ăна кўрентернине яланах каçарать, темĕн пек харкашсан та килте мана ĕç хыççăн яланах тутлă апат кĕтет – яшка, пельмень, компот... Чăн та, йăлтах пĕр турилккере.

* * *

– Хĕрĕм, çав Ваççана качча ан тух-ха! Пăх-ха ун çине: уксах, курпунлă, куçлăхсăр нимĕн те курмасть...

– Мана хитре каччă кирлĕ мар.

– Эпĕ ун пирки мар-ха... Ара, Ваççана пурнăç капла та кўрентерсе пĕтернĕ...

* * *

– Арçын ача, сана мĕнле чĕнеççĕ?

– Атте пек.

– Аçуна вара мĕнле чĕнеççĕ?

– Ман пек.

– Хм... Аçупа иксĕре мĕнле чĕнмелле-ха сире?

– Пĕр пек.

* * *

ПАИшник çул çинче сехетре 20 километр хăвăртлăхпа пыракан машинăна курать те чарăнма ыйтать. Салонра – 80 çулсенчи тăватă кинемей. Вĕсенчен пĕри – руль умĕнче. Ыттисем хăраса ўкни пĕрре пăхсах паллă.

– Мĕншĕн питĕ майĕпен пыратăр? – кăсăкланать инспектор.

– Ара, “20” тесе паллă тунă вĕт, унтан хăвăртрах юрамасть, – хуравлать кинемей.

– Хăвăртлăх мар ку, трасса номерĕ, – ăнлантарать инспектор. – Ыттисем мĕншĕн хăраса ўкнĕ?

– А-а-а... Эпир... тин çеç 210-мĕш трасса çинчен пăрăнтăмăр пулать-и вара?..

* * *

Туртма пăрахрăм та 320 тенкĕ перекетлерĕм. Анчах та туртма пăрахнине пула апат анма пуçларĕ. Виçĕ пин тенкĕлĕх те çисе ятăм пулĕ...

* * *

Çĕркаç такам шăнкăравларĕ. Çĕрле çăва çинче тĕл пулма сĕнчĕ. Вăт, тăмсай! Килмерĕ те хăй...

* * *

Лавккара нимĕн те туянмасан... хаксем йĕркеллех.

* * *

Театрта.

– Нускуна улăштар тесе каларăм вĕт сана! – тарăхса пăшăлтатать арăмĕ.

– Улăштартăм-çке, – хуравлать арçын. – Вăт пĕлсех тăтăм çав – пурпĕр ĕненместĕн. Акă кур, çакна пĕлсе кĕсьене чиксех килтĕм.

* * *

Хăйсене культурăллă çынсем теççĕ, Моцарт çинчен калаçаççĕ, хăйсем вара унăн пĕр картинине те курман.

* * *

Страус пуçне хăйăр ăшне мĕншĕн чикет тетĕр-и? Чеескер, арăмĕнчен вăрттăн каюрасемпе ĕçет.

* * *

5000 тенкĕлĕх укçана вакламалла, анчах та çывăхра никам та çук, ПАИ посчĕ кăна. Аптранипе инспектор патне пулăшу ыйтма пыраççĕ.

– Каçарăр, дежурствăна тин кăна тухрăм-ха эпĕ, – аллине саркалать лешĕ.

* * *

Аптекăна арçын пынă:

– Çăкăр пур-и?

– Çук, паллах, – хуравлаççĕ ăна. – Ку аптека вĕт!

Çакăн пек темиçе кун пулса иртет. Çакăн хыççăн аптекарь ятарласа çăкăр туянса хурать – çав арçын татах килсен ăна сутмашкăн. Тепĕр тесен, шел-им? Пушшех те, арçынни чирлĕ пулмалла тата...

Чăнах та, пĕр вăхăтран хайхи арçын татах килсе кĕрет:

– Кăлпасси пур-и?

– Çук, – аптраса ўкет аптекарь. – Çăкăр кăна.

– Эй, аллине сулать арçын. – Халĕ çăкăр кашни аптекăрах сутаççĕ...

* * *

Нарăс уйăхĕн 23-мĕшĕнче упăшкана мĕн парнелемелле-ши? А, укçа парнелĕп, тепĕр кун лавккана кайса ман валли пушмак туянăпăр.

* * *

Енчĕк пирки “укçа хутаççи” теççĕ. Мĕн чухлĕ уçса пăхатăп – нимĕн те курмастăп...

* * *

Пĕр арçынпа пурăнаттăм. Пĕррехинче ун патне СМС çыртăм: “Ĕçрен кăларса ячĕç, халĕ кĕрĕк туянма илнĕ кредитшăн санăн тўлеме тивет”. Киле таврăнтăм та – арçын та, япалисем те çук. Шўте пачах ăнланмасть. Тепре шухăшларăм та – хаваслă мар арçынпа мĕн тăвас манăн?

* * *

– Мана савни пăрахрĕ...

– Хăçан?

– Клубра çутă çутсан...

* * *

Арăма улталанине йышăннă хыççăн мăшăрăм çухалчĕ. Эрнерен кăна куракан пултăм – хăрах куçпа. Тепри çаплах уçăлмастчĕ-ха.



## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРЎСЕМ

### СУТАТĂП/ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 31 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Высокое качество. Песок, ОПГС. Доставка манипулятором. Без вых. **Т. 8-967-470-46-77.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. Работаем без выходных. **Т. 8-967-470-46-77.**

**4.Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка–бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.БЛОКИ керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40, **полнотелые** 20х20х40. Доставка. Разгрузка. Т. 89603016374.

**7.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** торф, кирп. бой, чернозём, навоз. Дёшево. Доставка. Т.: 89033581770, 89276689713.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**9.ГРАВМАССУ,** песок, **щебень, керамзит,** кирп. бой, чернозём. **Дёшево.** Доставка. Т. 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**13.Гравмассу, песок, керамзит,** бой кирпича. Д-ка. Т. 89033225766.

**14.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**15.Кирпич** любой**.** Т. 89613393363.

**16.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит – недорого. Т. 89053465671.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 8-917-675-75-28.

**24.Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники,** опрыскиватели, **погрузчики,** БДФ. Низкие цены. Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, колодезные **кольца.** Т. 89033468556.

**27.КИРПИЧ** от 10 руб., **БЛОКИ к/б,** пеноблоки. Манипулятор. Тел. 89033220208, 48-02-08.

**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ. Бесплатно:** замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. Т. 8-937-391-39-91.

**41.Бетон всех марок.** Недорого. **Доставка.** Т. 8-960-306-32-54.

**58.**Сетку-рабицу, заборы, **ворота** (кованые, распашные, гаражные), ДВЕРИ железные, **ОКНА** пластиковые. Кровля и обшивка домов. Козырьки, навесы. Строительные работы. Д-ка. Установка. Гарантия. **Льготникам скидки.** Т.: 89022881447, 387574. Сайт: metalservis21.ru

**76.Срубы** с комплектацией, липовые срубы, **каркасные дома** – на заказ. **Д-ка.** Т. 89379528467.

**142.Окна – дёшево.** Т. 89276684382.

**165.Бетон,** раствор от производителя. Дешево. Без выходных. Т. 8-967-790-61-16.

**176.ГРАВМАССУ, песок, навоз** и т.д. Работаем – пн.-сбб. Доставка. Низкие цены. Т. 89278502821.

**203.Песок, щебень, гравмассу.** Доставка. Скидки. Т. 8-987-667-97-56.

**235.**Тротуарные **ПЛИТЫ, брусчатку,** экопарковку, песок, щебень, **гравмассу,** цемент. Доставка. Укладка. Скидки. Т. 89033220479.

**237.**Профнастил, металлочерепицу, **сайдинг,** водостоки, утеплители. Скидки. **Доставка.** Монтаж. Замер. Т. 8-903-322-04-79.

**305.Гравмассу, песок, щебень,** асфальт. **крошку,** торф, чернозём. Т.: 89093005705, 89196567752.

**311.Гравмассу, песок, щебень,** бой кирпича. **Д-ка.** Т. 89050282225.

**594.ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 14000 руб., 3х8 – 18000 руб. Т. 8-917–666-80-20.

**595.ТЕПЛИЦЫ** от производителя по низким ценам. Т. 48-16-54.

**601.Песок, гравмассу, щебень.** Доставка, недорого. Т. 89176776655.

### ПУЛĂШУ/УСЛУГИ

**38.Чистка колодцев, скважин.** Дост-м предметы. Т. 89674715070.

**43.Бурение скважин** «под ключ». Гарантия. **Т. 8-927-668-43-82.**

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 8(8352) 215345, 89199785855. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**53.Изготовление ЛЕСТНИЦ** /дуб, хвоя, береза/. **Т. 8-917-662-34-94.**

**77.НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**125.Бурение скважин на воду.** Тел. 8-906-381-60-37.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**236.Кровельные, фасадные работы.** Установка забора. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

**500.КРОВЛЯ КРЫШИ,** плотницкие работы. Скидки. Т. 89373972442.

### ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**28.Ĕне, вăкăр, тына, сурăх,** сысна амисем. Т. 8-937-014-49-97.

**39.Бычков, коров, лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**574.Коров, бычков, тёлок, лошадей.** Т. 8-961-348-91-88.

**575.Коров, бычков, тёлок, лошадей.** Т. 8-967-796-71-42.

### ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

40 çулти арçын 30-42 çç. хĕрарăмпа паллашасшăн. Т. 8-937-942-17-20.

АУ «Издательский дом «Хыпар»

**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**

НА 3, 6-7 ЭТАЖАХ

Дома печати.

Справки по телефонам: 28-83-64, 28-83-70, 56-04-17.


## СĂНАНИНЧЕН

Эрешмен йăвинчен тухсан – ăшăтать.

Тăвар йĕпенсен сумăр пулать теççĕ.

Пулнă сĕлĕ тепĕр хут каюлансан кĕркунне йĕпе килет.

Пиçен тăрри вайлă тăк – хĕл сивĕ пулать.


« ХЫПАР »

Издательство çурчĕ” автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор-тĕп редактор М.М.АРЛАНОВ

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Сырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Т.Н.НАУМОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07 **Электрон почти:** hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тўлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшўллĕн “Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи» рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 02.09.2016 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.

428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.

64-24-01 – издательство директорĕ.

Тираж 6736. Заказ 3087.